Ич. № 303
32-265

Л. Ç. СПАССĂВ

# ЧĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔ ПЫСĂК ХАПРĂК-САВĂТЛĂ, ШУЛТРА ЙАЛХУÇАЛĂХЛĂ ÇУЛ ÇИНЧЕ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
1932

Л. Ç. СПАССĂВ

# ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔ ПЫСĂК ХАПРĂК-САВĂТЛĂ, ШУЛТРА ЙАЛХУҪАЛĂХЛĂ ҪУЛ ҪИНЂЕ

ПСК(п)П Ђăваш опкомĕн V-мĕш пленăмĕнђе, тата Ђăваш респуплĕк Тĕпĕçтăвкомĕн III-мĕш çеççинђе „Ђăваш респуплĕкĕн 1932-мĕш çулхи халăх хуçалăхĕн планĕ“ çинђен тунă токлатсене йусаса çырнă

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР—1932

## Сотсиалисăм паттăрăн ÿссе пырать.

Сотсиалисăм тăвас ĕçĕн пилĕк çуллăх планне йышăннăран вара ĕнтĕ виçĕ çул иртрĕ. Халĕ епĕр пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртес йенђен тăваттăмĕш çул çине пусрăмăр. Иртнĕ виçĕ çул хушшинђе (1929—1931-мĕш çулсенђе) Совет сойусĕнђи рапођђи клас, Комуниссен партти тĕрĕс çулпа йертсе пынă пирки, питĕ тимлĕн калама çук хăстарлă кĕрешнĕ майпа, пилĕк çуллăх план сатанисене епĕр çултан çулах планпа йышăннинђен нумай маларах пурнăçа кĕртсе пытăмăр. Промышлĕннăçре те, йаалхуçалăхĕнђе те пилĕк çуллăх планра кăтартнă сатанисене йалан маларах туса пытăмăр. Çав майпа вара пилĕк çуллăх плана—пилĕк çул хушшинђе мар—тăватă çултах пурнăçа кĕртме вăй çитерекен пултăмăр.

Малтан плана йышăннă ђух, пилĕк çуллăх планпа йышăннине 1933-мĕш çулта тин пурнăçа кĕртсе çитеретпĕр пуљ тесе шутланăђђĕ. Анђах иртнĕ виçĕ çул хушшинђе пысăк ÿсĕмсем тунă майпе, плана йышăннинђен йалан маларах ÿссе пынă майпе, пилĕк çуллăх плана килес çул тин мар, 1933-мĕш çулта мар,—кăçалах—1932-мĕш çултах, пилĕк çуллăхăн тăваттăмĕш çулĕнђех—пурнăçа кĕртсе çитерме вăй илтĕмĕр.

Пилĕк çул хушши ĕçлесе тăвас ÿсĕмсене халĕ ĕнтĕ епĕр тăватă çул хушшинђех пурнăçа кĕртме пултаратпăр. Нехтă. кăларакан рапођђисем, електритсă машшинĕсем тăвакан рапођђисем хăйсен пилĕк çуллăх планĕсене икĕ çул çурăрах пурнăçа кĕртнĕ. Темђул пысăк савăтсем хăйсен пилĕк çуллăх планĕсене виçĕ çул хушшинђе тултарнă.

Çапла пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртсе пыни 1932-мĕш çул вађђи халăх хуçалăх планне «пилĕк çуллăха—тăватă çулта» тенĕ лосăнка пурнăçа кĕртес шутпа йышăнма май кÿђĕ.

Çак иртнĕ виçĕ çул хушшинђе тунă ĕçсем ђăн ђăнах калама çук ђаплă ĕçсем. **Епĕр Совет сойусĕнђе сотсиалисăм никĕсне хывса çитертĕмĕр.** Аслă çулпуçĕ Ленин—«Раççей сотсиалисăмлă пулмалла» тени пурнăçа кĕрет. Сотсиалисăмлă Раççей ĕнтĕ тахçан ÿлĕм пулас йапала мар—пайан кунхи, куçа кĕретĕн пурнăç пулаĭ. Сотсиалисăм никĕсне хывса çитертĕмĕр, Совет сойусĕнђе сотсиалисăм çĕнтерсе пыраĭ. Совет сойусĕнђе ĕçлекенсемпе хресђенсем историре нихçан пулман ђаплă, калама çук паттăр ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем пĕтĕм халăх хуçалăхĕ вађђи çĕпĕ технĕккă никĕсĕ хыврĕç.

Ленин çапла каланă:—Раççейе хресђен хуçалăхĕнђе тырпул лайăх тунипе кăна çăлма çук. Ăна хресђенсене кирлĕ йапаласем тăратакан çăмăл промышлĕннăç лайăх ĕçленипе те çăлма çук. Раççейе çăлас тесен, ђи пирвай пире йăвăр шултра интустри кирлĕ,—тенĕ Ленин. Халĕ ĕнтĕ Совет сойусĕ, ĕлĕкхи Раççей, куçа кĕре-

тĕн, ђăн ђăнах интустриллĕ çĕршыв пулса тăђĕ. Пĕтĕм халăх хуçалăхĕнђе интустри пуçра çул тытса пыраť. Ку ĕç пирĕн тĕрĕс çул çинђе. Мĕншĕн тесен епĕр йăвăр промышлĕннăçа вăйлăран вăйлă хăватлатса йатăмăр. Епĕр ĕнтĕ хăшпĕр уђаскăсенђе технĕккă тĕлĕшĕнђен малта пыракан кăпиталисла патшалăхсене хуса çитсе иртсе карăмăр. Тем пысăкĕш савăтсем, електритсă парса тăракан тĕнђе курман стантсăсем, пљумĕнксем, çĕнĕ хатĕрсем, трактăрсем, компайăнсем, йалхуçалăхĕнђе тем ĕçе те тăвакан машшинсем, тем пысăкĕш сăмаљотсем (сывлăшри карапсем)—çаксене пурне те Совет сойусĕнђи рапођђи клас хăй аллипе турĕ. **Çаксене туса рапођђисем пĕтĕм халăх хуçалăхĕ ваљљи çĕнĕ технĕккă никĕсĕ хывреĕç.**

Епĕр ĕнтĕ сотсиалисăмла економĕк никĕсне туса пĕтертĕмĕр. Пуçра сотсиалисăмла интустри çул тытса пыраť. Уйрăм сапаланђăк ђухăнпа вăтам хресђен хуçалăхĕсем тем ђухлĕш, пĕтĕм Совет сойусĕпе шутласан 62 прођђăн ытла, колхоса кĕђĕç. Çĕнĕ, сотсиалисăмла хуçалăх йĕрки çине куçса ĕçлеме пуçларĕç вĕсем. Кăпиталисăма ўсме вăй паракан тымарсем пĕтсе пыраççĕ. Классен вăйĕсем пит вăйлă улшăнђĕç. Çĕрĕçĕнђе тĕпре—халĕ колхоçнĕк. Тĕш тырă тăвакан тĕп районсенђе пур ђухăнпа вăтам хресђен колхоссене пĕрлешнĕ майпа кулаксен класне пĕтереççĕ, ытти вырăнсенђе те ăна çĕнтерўллĕ амантса тăкнă.

Происвотствă вăйĕ хăватлă ўссе пыни ĕçхалăх массисен пурнăçне çулран çул ытларах

йусаса лайăхлатма май парать. Совет сойусĕнђе ĕçсĕрлĕхе пĕтĕмпех пĕтерни—çулталăк иртрĕ ĕнтĕ. Рапођђисемпе слушăшђисен хисепĕ кунран кун йышланса пырать. Пĕр иртнĕ 1931-мĕш çултах рапођђисемпе слушăшђисен шуђĕ виçĕ мĕлйунран та ытла ўсрĕ. Ĕç укçи фонђĕ 18 прођђăн таран ўсрĕ.

Çавăнпа пĕрлех сотсиаљни страхховани укçи те пысăккăн ўсет. Рапођђисемпе слушăшђисем ваљљи çуртйĕрсем лартма паракан укçа шуђĕ те вăйлă ўсет. Куљттур строиттĕлстви тем пек хăвăрт сарăлса пырать. Совет сойусĕ çак çул хушшинђех акă талкăшпе хут пĕлекен çĕршыв пулса тăмалла. Рапођђи клас хушшинђен тухнă çĕнĕ иншенерсемпе технĕксем нумайланса пыраççĕ. Аслă, тата вăтам техниђђĕски шкулсенђе вĕренекенсен шуђĕ темиçе çĕр пин çын ытла ўсрĕ. Епĕр халĕ хула хуçалăхне тĕпрен çĕнетме тытăнтăмăр. Хула хуçалăхне çĕнетме тытăнни вăл—рапођђи клас пурнăçне йусаса пынă ĕçре малалла йарса пуснă тата тепĕр пысăк утăм пулать.

Çапла ĕнтĕ «кам кама» текен ыйту пролеттариат майлă татăлђĕ. Совет сойусĕнђе сотсиалисăм çĕнтерсе пырать, ăна ђарма пултараканни çук, пулма та пултараймасть.

Çапла ĕнтĕ пирĕн хуçалăх пултаруллă çĕнтерў çулĕпе пырать. Кăпиталисăмла патшалăхсенђе пађах урăхла. 1929-мĕш çулта унта пĕтĕм халăх хуçалăхĕнђе криçĕс тапранса карĕ. Çав криçĕс ĕнтĕ пĕтĕм тĕнђене йарса илђĕ. Вăл сарăлнăçемĕн сарăлса пырать, тарăнланнăçемĕн тарăн-

ланса пыраӗ. Кăпиталисăм криҫĕсĕ пĕтĕм тĕнҫипе ахăраӗ, унăн сивҫирĕ ҫĕтретмен пĕр кăпиталисăмла патшалăх та ҫук халĕ. Пур патшалăхсенҫе те производство вилмелле ӳкет, ĕҫсĕрлĕх ним ĕретсĕр ӳсет, тырпул акса хăваракан ҫĕр виҫи шутсăр ҫакаӗ, хресҫен хуҫалăхĕсем мĕлйун мĕлйунĕпе ҫука тухса йулаҫҫĕ.

Совет сойусĕ—сотсиалисăм тăвакан ҫĕршыв—ҫĕнтерӳллĕ утăмсемпе малалла пыраӗ. Совет сойусĕнҫе производство ҫултан ҫул тĕнҫе курман хăвăртлăхсемпе ӳссе пыраӗ. Вăл ҫĕнтерӳллĕ ӳсĕмсем ҫинҫен пилĕк ҫуллăх планăн виҫҫĕмĕш, татăклă ҫулĕнҫе тунă ĕҫсем пит витĕмлĕ кастарса тăраҫҫĕ.

Ҫав иртнĕ 1931-мĕш ҫул хушшинҫе промышлĕнăҫ протуксийĕ унҫенхи ҫулпа танлаштарсан, пĕтĕмĕшпе илсен, 21 проҫҫăн таран ӳсрĕ, тепĕр май каласан, 4 мĕлйарт та 800 мĕлйун тенкĕлĕх ӳсрĕ. Пилĕк ҫуллăх план тăрăх виҫҫĕмĕш ҫулта ку тĕлĕшпе тумалли ӳсĕме 113 проҫҫăн таран пурнăҫа кĕртни пулаӗ вăл. Халăх тоххоҫĕ 18 проҫҫăн таран ӳсрĕ. Тĕп строительство планне 16 мĕлйарт тенкĕлĕх тултарнă.

Мĕнрен килҫĕҫ пирĕн ҫак пултаруллă ӳсĕмсем? Сотсиалисăмла хуҫалăха план тăрăх илсе пынинҫен килеҫҫĕ вĕсем, пурринҫен те ытла хулари, тата йалти ĕҫхалăхĕ пилĕк ҫуллăх плана тăватă ҫулта тултарассишĕн паттăрла кĕрешнинҫен килҫĕҫ ҫав хăватлă ӳсĕмсем. Вăл ӳсĕмсене епĕр Комуниссен партти, тата унăн Тĕп комиттеҫĕ тĕрĕс йертсе пынипе турăмăр. Комуниссен парттин Тĕп комиттеҫĕ сотсиалисăмла

наступленире поҫшевикла хӑвӑртлӑхсем илессишӗн пит ҫирӗп, шанҫӑклӑ кӗрешсе пыҫӗ, кӗрешӗве сарса вӑйлатса пыҫӗ, оппортунисла сулӑнҫӑксене, иккӗленекен шухӑшсене аркатса пыҫӗ, ҫавӑнпа пулҫӗҫ пирӗн ҫав халҫҫен тӗнҫе курман ҫитӗнӳсем.

Халӗ пирӗн умра мӗнле сатаҫсем тӑраҫҫӗ-ха? Комуниссен парттин 16-мӗш сиесӗ Тӗп комиттета ҫапла каласа хӑварнӑ:

— Сотсиализсӑмла строиттӗлствӑра малалла та ҫӗнтерӳллӗ поҫшевикла хӑвӑртлӑхсем пулҫҫӑр, пилӗк ҫуллӑх плана ҫӑннипех тӑватӑ ҫулта тултармалла пултӑр, пӗтӗм Совет сойусӗпе талкӑшпех колхоса куҫнӑ май кулаксен класне ним пӑрӑнмасӑр пӗтерсе пымалла,—тенӗ. Ҫак сатаҫсем тӑраҫҫӗ ӗнтӗ пирӗн умра пайан.

Вӑл сатаҫсене пӗтӗмӗшпех пурнӑҫа кӗртсе ҫитерес патне ҫитрӗмӗр ӗнтӗ епӗр. Кӑҫал, 1932-мӗш ҫулта, халӑх хуҫалӑх планӗ тӑрӑх пӗтӗм промышлӗннӑҫ протуксийӗ 36 проҫҫӑн таран ӳсмелле. (Вара промышлӗннӑҫ протуксийӗ вӑрҫӑҫҫенхи виҫерен 4 хут ытла пулаҭ). Йавӑр шултра интустрийе хӑйне уйрӑм илсен, вӑл кӑҫал, 1932-мӗш ҫулта, 43 проҫҫӑн таран ӳсмелле. Колхоссем хресҫен хуҫалӑхӗсене 75 проҫҫӑн таран пӗрлештермелле. (Пилӗк ҫуллӑх план тӑрӑх 20 проҫҫӑн кӑна шутлачӑҫҫӗ). Акакан ҫӗр шуҫӗ 5,4 проҫҫӑн ӳсмелле. Тырпул тухӑҫӗ тӗш тырӑсем тӑрӑх 12 проҫҫӑнран кайа мар ӳсмелле, ҫӗр мамӑкӗ тӑрӑх—16 проҫҫӑн. Ӗҫре тӑракан рапоҫҫисен шуҫӗ тата ҫӗнӗрен 2 мӗлийун та 500 пин ҫын таранҫен ӳсмелле. Ӗҫ укҫи 11

проЂЂăн ÿсмелле, ĕçхалăхне кирлĕ таварсен фонЂĕ 30 проЂЂăн тарап ÿсмелле. Çакăн пек курăнаѓ ĕнтĕ пилĕк çуллăхăн тăваттăмĕш, йулашки çулĕнЂи, халăх хуçалăх планĕн кĕлетки.

**Пирĕн ĕçре, малтанхи пекех, тĕпре шултра йăвăр промышлĕннăç пыраѓ. Ун ÿсĕмĕ васкавлă хăвăртлăхсемпе пыни пирĕн пĕтĕм халăх хуçалăхне çĕнĕлле йусаса йама вăй параѓ.** Йăвăр шултра промышлĕннăç васкавлă хăвăртлăхсемпе ÿсни Совет сойусне ытти патшалăхсенЂен нимле хатĕр кÿмесĕрех вăйланма май параѓ, нимрен те йут патшалăхсен куçĕнЂен пăхми пулатпăр.

Сотсиалисăмла йалхуçалăхне тума та, сотсиалисăмла выЉăх ĕрЂетме те, совхос строиттĕлствине вăйлатма та, колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнЂен тĕреклетме те йăвăр шултра промышлĕннăçа васкавлă хăвăртлăхсемпе ÿстерни кирлĕ.

Совет сойусне тапăнма хатĕрленес ĕç вăйланни, империалиссем Совет сойусне хирĕç тытакан економĕк тĕлĕшĕпе пыракан кĕрешÿ çивĕЂленсе пыни—технĕккă тĕлĕшĕнЂен малта пыракан патшалăхсене пит хăвăрт хăваласа çитсе иртсе кайма хушаççĕ.—Хăвăртлăхсене Ђакарни—йулас тенине пĕлтерет вăл. Йулакансене хĕсеççĕ, çĕмĕреççĕ. Пирĕн хамăра пĕртте çĕмĕртерес килмест,—тенĕ Сталин йулташ.

Пилĕк çуллăх планăн кăçалхи çулĕнЂи халăх хуçалăх планĕнЂе самай та тĕп вырăн çаксем йышăнаççĕ: метталлурки, вут хутмалли промышлĕннăç (пуринЂен ытла çĕр кăмрăк), маш-

шинсем тăвасси (пуринҫен малтан транспăрт ваҫҫи). Пĕтĕм вăйхала, нумайĕш укҫа-тенке ҫăн малтан халăх хуҫалăхĕн ҫав пайĕсене ӳстерсе вăйлатма хумалла,—терĕ Совет сойус Тĕпĕҫтăвкомĕн 2-мĕш ҫеҫҫийĕ.

Ҫĕршыва интустрилес ĕҫре пирĕн хура метталлурки (ҫукун-хурҫă) промышлĕннăҫне ӳстерресси тĕп вырăн йышăнса тăмалла. 1932-мĕш ҫулта 9 мĕлйун тоннă ҫукун шăратса кăлармалла, 9 мĕлйун та 500 пин тоннă хурҫă, 6 мĕлйун та 700 пин тоннă проккат-тимĕр. Ҫакна пурнăҫа кĕртме вăл промышлĕннăҫри строиттĕлствă ĕҫĕсен планне тултармалла. Ҫак тĕлĕшпе вара кăҫал пирĕн ҫĕнĕрен 24 тимĕр-тăмăр шăратмалли кăмака ĕҫе кĕртмелле. Вĕсем пурте пекех малта пыракан кăпиталисла патшалăхсенҫи тимĕр-тăмăр шăратакан кăмакасенҫен вăйлăрах пулаҫҫĕ. Вĕсемсĕр пуҫне тата 63 марттĕнăвски кăмака, 12 електритсă кăмака кĕмелле, 7 пҫумĕнк, 21 ҫĕнĕ проккат станĕ лартмалла. Ҫапла вара пҫумĕнксен пĕтĕм тĕнҫери хисепсенҫен виҫҫĕмĕш пайĕ пирĕн Совет сойусĕнҫе пулаť.

Иккĕмĕш уҫаскă вăл—вут хутмалли йапаласен промышлĕннăҫ, пуринҫен ытла ҫĕр кăмрăк кăларасси. Ҫĕр кăмрăкĕсĕр ҫукун, хурҫă, тимĕр тавраш тума та ҫук, електритсă стантсисене ĕҫлеме те, йалхуҫалăх ваҫҫи машшинсем т. ыт. тума та май ҫук. Ку уҫаскăра сăтăрҫăсем нумайҫҫен ĕҫленĕ пирки епĕр ҫылайах кайа йулни палăраť. 1932-мĕш ҫулта ҫĕр кăмрăк кăлармалли плана тултарас тесе ĕҫе мехханисатсилессишĕн вăйлă кĕрешме тивет. Ĕлĕкхи Тон-

пассăр пуçне, кăçал Куçнетски паççейăп паллă вырăн йышăнаŷ. Макниттокорски, Куçнетски метталлурки киканђĕсен строиттĕлствипе пĕрле çĕр кăмрăк паракан Куспаспа Каракантă вăйланса каймалла. Çĕр кăмрăк промышлĕннăç тĕп строиттĕлствине кăçал 810 мĕлйун тенкĕ хумалла. Вара пирĕн шахтăсем çултаlăкра 195 мĕлйун тоннă çĕр кăмрăк паракан пулмалла. (Вăл шутран 87 мĕлйун тоннă Тонпасра, 43 мĕлйун та 700 пин тоннă Куспасра).

Машшинсем тăвакан промышлĕннăç Совет сойусĕн пĕтĕм хуçалăхне технĕккă тĕлĕшĕнђеп вăйлатаŷ. Ку уђаскăра та епĕр ку таранђђен пысăк çĕнтерӳсем турăмăр. Совет сойусне машшинсем йутран кӳрекен çĕршывран машшинсем хамăр тăвакан çĕршыв тумалла тесе хăварнăђђĕ Комуниссен парттин 14-мĕш сйесĕ. Халĕ, ђăпахах, Совет сойусĕ машшинсем тăвакан çĕршыв пулђĕ. Анђах епĕр ку таранђђен тунипе лăплланса ларма пултараймастпăр. **Машшинсем тăвакан промышлĕннăç ӳсни Совет сойусне технĕкпа економĕк тĕлĕшĕнђен кăпиталисла патшалăхсен куçĕнђен пăхасран хăтараŷ.**

1932-мĕш çулта транспăрт вађђи машшинсем тăвасси паллă вырăн йышăнса тăраŷ. 1300 пăравус, тата 50 пин таварни вакун туса памалла. Йулашки вăхăтра пирĕн хуçалăх ӳспĕ майпе транспăрт «хĕсĕк» вырăп, хуçалăха кирлинђен кайарах йулса пынă уђаскă пулса тăђĕ. 1932-мĕш çулта пĕтĕм ĕçхалăх, пĕтĕм Совет сойус çĕршывĕ транспăрт уђаскинђе пит пысăк ĕçсем тумалла. Контролђ ђыхвăрĕсем тăрăх транспăрт

çинҫи çĕнĕ строиттĕлства виçĕ мĕлйарт ытла укçа хумалла. Тĕп ĕçсем çак ҫукуп çулсене вăйлатассинҫе пулса иртмелле: Мускав—Макниттокорски—Куçнетск, Мускав—Тонпас, тата Тонпасран тухакан çулсем çинҫе.

Йалхуçалăх тĕлĕшĕнҫен 1932-мĕш çулхи плана колхос йухăмне ҫылай вăйлатасси кĕрет (хресҫен хуçалăхĕсем 75 проҫҫăн колхоса кĕмелле), ăна сотсиалисăмла йалхуçалăхĕнҫи происвотствă вăйĕçене ӳстерсе пынипе туса пымалла. Çавăнпа та хаҍхи вăхăтра колхоссене оркенисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнҫен тĕреклетесси колхоссен строиттĕлствинҫе—тĕп сатаҫ пулса тăраҭ. 82 пин трактăр, 900 мĕлйун тенкĕлĕх ытла йалхуçалăх машшин хатĕрĕсем, çĕнĕрен 1.700 машшинпа трактăр стантсисем тумалла. Çаксем вĕсем йалхуçалăхĕн сотсиалисăмла пайĕн çирĕп технĕккă никĕсне нумай çӳле хăпартаççĕ. Йалта сотсиалисăмла хурăмсем çирĕплетес тĕлĕшпе ку пит вăйлă услови пулса тăраҭ.

Колхоссене оркенисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнҫен тĕреклетме, ҫăн малтан ĕçе тĕрĕс оркенисатсилемелле, технĕккă вăйĕпе пĕтĕмĕшпех усă курма пĕлмелле. Трактăр, тата çĕнĕ кирек мĕнле йалхуçалăх машшин вăйĕпе кăна мар, колхоссен, совхоссен мĕн пур пек вăйĕпе пуринпе те тĕплĕн усă курмалла. Йалхуçалăхне сотсиалисăмла хурăмпа тытса пыни мĕн ҫухлĕ усăллăрах, çавсемпе пуринпе те лайăхрах усă курма тăрăшмалла.

Тепĕр йенҫен пирĕн—нумай пулмасҭ уйрăм, харпăр хăй хуçалăхпе пурăннă, халĕ колхосра

тăракан хресӡенрен сотсиалисăмлă рапотнĕк тăвассишĕн питĕ тимлĕ кĕрешмелле. Вак пуршуалла шухăшсен йулашкийĕсене пĕтерсе лартма тăрăшмалла. Колхоссенӡе кулакла туртăмсене пĕтерсе лартмалла. Колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнӡен çирĕплетес ĕçре машшинпа трактăр стантсисем паллă вырăн йышăнса тăмалла.

Совхоссем тăвас тĕлĕшре те епĕр кăçал пысăк утăмсем тăватпăр. Совхоссен хисĕпе 24 проӡӡăн таран ӳсмелле. Пуринӡен ытла ыӡăх-ӡĕрлĕх совхосĕсемпе техниӡӡĕски куӡттур акакан совхоссем çине пăхмалла пулаӗ. Комуниссен парттин Тĕп комиттеӡĕпе Совет сойус Халăх кăмиссарĕсен канашĕ сотсиалисăмла ыӡăх-ӡĕрлĕх ĕрӡетесси çинӡен иртнĕ çулхи ийуӡре кăларнă ӡĕнĕве ӡăн ӡăнах пурнăçа кĕртме вăхăт ĕнтĕ.

Çаксем ĕнтĕ 1932-мĕш çулта пирĕн умра тăракан сатаӡсем. Çак сатаӡсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмелле пулаӗ пирĕн 1932-мĕш çулта. Епĕр вĕсене пурнăçа кĕртетпĕрех.

Темиçе çул маларах пирĕн ĕçе мĕнле йăвăрлăхсем ӡăрмантарса пынă? Промышлĕннăç кайа йулни,—ку пĕр йенӡен, тепĕр йенӡен—йалхуçалăхĕ ытла та вакки, сапаланӡăкки. Халĕ ĕнтĕ промышлĕннăçа тĕпренех çĕнетсе йарас ĕçре пит пысăк çĕнтерӳсем тунă епĕр. Çур пинрен ытла çĕнĕ хапрăк-савăтсем ĕçе кĕӡĕç. Вĕсем хушшинӡе çав тери пысăк, пĕтĕм тĕнӡипе те çук кикантсем. Епĕр ĕнтĕ ӡылай çĕнĕ происвотствăсем орканисатсилесе йанă. Çапла ĕнтĕ технĕккă тĕлĕшĕнӡен кайа йулнине пĕтерсе пырас ĕçре пит пысăк çĕнтерӳсем тунă.

Çав вăхăтрах Совет сойусĕ халĕ ĕнтĕ йалхуçалăх тĕлĕшĕнђен те сапаланђăк, вак-тĕвек хресђен хуçалăхлă çĕршыв мар. Шултра йалхуçалăх лăхĕ орканисатсилес тĕлĕшпе епĕр тĕнђери пур кăпиталисла патшалăхсенђен те малта тăратпăр. Халĕ Совет сойусĕ пит пысăк утăмпа тата малалла йарса пусаť. Пĕтĕмĕшпе илсен, пĕтĕм Совет сойусĕпе талкăшпех колхоса куçса пĕтеретпĕр. Çав вăхăтрах йалхуçалăхĕнђи çĕнĕ сотсиалисăмла хурăмсене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетессишĕн вирлĕн кĕрешетпĕр. Çавсем вĕсем сотсиалисăмла йалхуçалăх ӳсĕмне малалла васкавлă хăвăртлăхсемпе илсе пыма тĕреклĕ май параççĕ.

Анђах епĕр ĕçре сотсиалисăмла çиçтем пахалăхĕсемпе кирлĕ таранах усă курма вĕренеймен-ха.

1932-мĕш çул планне тултарассишĕн çĕнтерӳллĕ кĕрешес ĕçре пирĕн мĕн тĕп вырăнта тăмалла-ха? Акă мĕн.—**Пĕтĕм хуçалăх ĕçĕн пахалăхĕ, ĕçе лайăх орканисатсилени, хуçалăх йенђен тĕплĕ йертсе пырассине тата çӳлерех çĕклени тĕп вырăнта тăмалла. Кунта ђи кирли—Сталин йулташ кăтартнă 6 условисене пурнăçа кĕртсе хуçалăхри ĕçе улшăннă хуçалăх опстановккипе килĕшӳллĕ йусаса, çĕнетсе пырасси. Комуниссен партти çулпуçĕ Сталин йулташ кăтартса панă ултă условийе тĕрĕс пурнăçа кĕртнипе анђах епĕр хамăр хуçалăхри ĕçсене тата хăвăртрах çĕнтерӳпе йама пултаратпăр. Çав условисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешни хуçалăхра та, пĕтĕм ĕçре те витĕр курăнса пымалла, вăл пĕтĕм ĕçĕн тытăмĕ пулмалла.**

Сталин йулташӑн условийӗсене пурнӑҫа кӗртессинҫе пит палла вырӑн йышӑнаканни вӑл—хуҫалӑх рашҫуҫӗ. Ку условийе пӗр пӑрӑнмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пынӑ ҫух ирӗксӗрех ытти условисене те ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пымалла пулаӗ. Унсӑрӑн хуҫалӑхри ӗҫе нимле те йусаса йама ҫук. Хуҫалӑх рашҫуҫӗ вӑл—хуҫалӑх аппаратӗнҫи пур майсен ӗҫне те йусаса йама пултаракан хатӗр. Хуҫалӑх рашҫуҫӗ вӑл—плана тултарассишӗн кӗрешес ӗҫре кирлӗ вирлӗ хатӗр. Хуҫалӑх рашҫутне ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыни пахалӑх тӗлӗшпе кайа йулса пынине пӗтерме пулӑшаӗ. Пахалӑх тӗлӗшпе панӑ кӑтартусене пурнӑҫа кӗртмесен, плана пӗтӗмӗшпех тултартӑмӑр теме нихҫан та май ҫук.

Пахалӑхшӑн кӗрешес ӗҫ ҫине 1932-мӗш ҫулта пирӗн питӗ хытӑ пӑхмалла пулаӗ. Ку тӗлӗшпе ҫак сатаҫа пурнӑҫа кӗртмелле:

Таварӑн хӑйне ларакан хакне 7 проҫҫӑн йӳнетмелле, ӗҫ тухӑҫлӑхне 22 проҫҫӑн ӳстермелле, строиттӗлствӑ интӗксне 17 проҫҫӑн йӳнетмелле. Пахалӑх кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пирӗн Совет сойусӗпе план тӑрӑх 5 мӗлйарт тенкӗ укҫа перекетлемелле.

Ҫапла перекетленӗ укҫана планра кӑтартнӑ хапрӑк-савӑтсем, шахтӑсем, ҫукун ҫулсем, совхоссем, машшинпа трактӑр стантсисем тума йамалла. Ҫавна перекетлемесен, йышӑннӑ плана тултартӑмӑр теме ҫук. Ҫавӑнпа ӗнтӗ таварӑн хӑйне ларакан хакне йӳнетни, тата ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартни питӗ кирлӗ, ответлӑ сатани.

Хуҫалӑх ӳсӗмӗнҫе ҫак тапхӑрта катӑрсем пирки

тăракан ыйту палла выран йышăнса тăрат. Катăрсемшĕн вирлĕ кĕрешмелле пулат. Рапочи класран тухнă сынсенчен техничĕски интелекентси хатĕрлемелле. Пирĕн ку тĕлĕшпе те пысăк ситĕнӳсем пур. Аслă шкулсене лайăхлатнă. Халăх хусалăхĕн тĕрлĕ пайĕсене сулран сул самрăк, совет спетсиалисĕсем пинĕ пинĕпе ĕсе кĕресçĕ. Анчах ку таранччен тунипе лăпланса лармалла мар. Аслă техничĕски шкулсенче вĕренекенсен шучĕ 1931-мĕш султа Совет сойусĕпе 381 пин сынна йахăн пулнă. Кăсал 565 пине ситмелле. Технĕккăмсенче 825 пин пулнă, кăсал пĕр мĕлйун та 219 пине ситмелле. Техничĕски шкулсене вăйлатассишĕн кĕрешнипе пĕрлех шкулсен вĕрентӳ ĕсĕнчи пахалăхĕшĕн хытă сапăсмалла. Сав вăхăтрах катăрсене ĕс синче, ĕс вăхăтĕнчех хатĕрлесе пырассишĕн вирлĕн кĕрешмелле. Пур пек катăрсен пĕлĕвне, ăсталăхне ĕс вăхăтĕнче, ĕс синчех хăпартса пымалла. Сапла ĕслесен сес епĕр Сталин йулташ кăларса тăратнă лосăнка—технĕккăна вĕренсе ситмелле—тенине пурнăса кĕртме пултаратпăр.

Кив интелекентси туртăмĕнче пулнă улшăнăва татăклă сирĕплетессишĕн те чылай ĕслемелле пулат. Сав вăхăтрах кив интелекентси хушшинчи Совет власне курайман, тата чăрмавлă елементсене хирĕс татăклă кĕрешессине те вăйлатса йамалла.

Катăрсем хатĕрлесси сынсене тĕрĕс суйласа уйăрса тивĕслĕ вырăна лартас ыйтупа сыхăнса тăрат. Ленин йулташ каланипе асра тытас пулат. Вăл сапла каланă:—Пуринчен ытла, ман

шутпа, çынсене тĕрĕс суйласа илме пĕлни кирлĕ, тата мĕн хушнине мĕнле туса пынине тĕрĕслес тăмалла,—тенĕ вăл.

Плана тултарассишĕн кĕрешни çĕнтерӳллĕ пултăр тесен рапоҍҍи класăн пурнăçне лайăхлатмалла. Рапоҍҍисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе те паллă çĕнтерӳсем тунă епĕр. Анҍах рапоҍҍисен кунран кун ӳссе пыракан ыйтăвĕсемпе танаштарсан, ку таранҍҍен тунипех çитмест. Сталин йулташ çапла каланă:

— Ĕлĕкхипе танаштарса тăмалла мар, рапоҍҍисен хаљхи, ӳссе пыракан ыйтăвĕсене кура туса пымалла, вĕсен пурнăçне йусаса ĕçсене аванлатмалла,—тенĕ. Хаљ рапоҍҍи—ĕлĕкхи пек мар ĕнтĕ. Совет рапоҍҍийĕ пурлăх тĕлĕшпе те, куљттур тĕлĕшпе те мĕн çитменнине пĕтĕмпех пĕтерсе туп тулли пурнăçпа пурăнма ыйтаŭ. Вăл ăна ыйтма тивĕççипе пултараŭ. Çавăнпа пирĕн ăна çав условисене туса парас пулаŭ,—тенĕ Сталин йулташ.

Йăвăр шултра интустри хăватлă ӳссе пынипе епĕр хамăр технĕккă йенҍен кайа йулнине пĕтеретпĕр, шултра сотсиалисăмла йалхуçалăх турăмăр. Вара çăмăл интустри ӳсĕмĕ те васкавлă хăвăртлăхсемпе малалла карĕ. Унҍҍен унăн ӳсме вăй çукҍĕ. Халĕ ĕнтĕ ĕççыннине кирлĕ таварсем туса кăларасси те пысăк хăвăртлăхсемпе малалла карĕ. Çавна пула, тата совхоссемпе колхоссенҍи происвотствă та вăйланнă май, ĕççыннине кирлĕ тавар фонҍĕ 1932-мĕш çулта 8 мĕлйарт тенкĕлĕх ытла ӳсет, проҍҍăнпа шутласан—30 проҍҍăн ӳсет.

Çавăнпа та тавар тăратакан оркапнсатсисен вирлĕн ĕçлемелле пулаĭ. Совет суту-илĕвне сарса пырса, унăн пур оркапнсатсисенђе те хуçалăх рашђутне пурнăçа кĕртсе, ĕçхалăхĕн пурнăçпа йăла условийĕсене çăмăллатăпăр.

Кунпа йунашарах 1932-мĕш çулта хула хуçалăхне тĕпрен йусаса çĕнетсе йамалла пулаĭ. Хула хуçалăхĕн тĕп строиттĕлстви вађђи паракан укçа-тенкĕ шуђĕ 132 прођђăн ўсет.

Пилĕк çуллăх планăн тăваттăмĕш, йулашки çулне кăтартса панă плана ытлашшипех тултарма май пур. Епĕр ăна ытлашшипех тултарăпăр та. Çапла вара пилĕк çуллăх плана тăватă çулта пурнăçа кĕртсе çитеретпĕр.

## Пирĕн край пођшевикла хăвăртлăхсемпе интустриленет.

Совет сойусĕ вăйланса пынă май, пирĕн Ђулхула крайĕ те калама çук вăйланса пыраĭ, пођшевикла хăвăртлăхсемпе интустриленет.

Пилĕк çуллăх план тăрăх промышлĕннăçра çĕнĕ стройккăна 1.141 мĕлйун тенкĕ укçа хывмалла пулнă. Çак иртнĕ виçĕ çул хушшинђех 1.760 мĕлйун тенкĕлĕх çĕнĕ строиттĕлствă тунă.

Електритсă промышлĕннăçĕнђе пилĕк çуллăх план тăрăх 120 пин киловат електритсă енерки тăваканлăх стантсăсем лартмалла пулнă. Халех вăл шута тултарнă, унтан иртсе те кайнă,—198 пин киловата çитернĕ. 1932-мĕш çулта 284 пин киловата çитермелле. Çапла вара електритсă енерки тăвас тĕлĕшре те пилĕк çуллăх плана тултарса икĕ хут ытларах вăйланнă.

Йалхуçалăхĕнђи тĕп строиттĕлства 978 мĕлйун тенкĕ памалла пулнă. 1931-мĕш çул вĕçне—847 мĕлйун панă, 1932-мĕш çулта пĕр мĕлйарт çурра çитмелле. Çапла вара йалхуçалăх тăлĕшĕнђе те пилĕк çуллăх плана ытлашшипех тултаратпăр.

1933-мĕш çулăн вĕçĕнђе рапођђисен йышĕ 198 пине çитмелле пулнă, халђхи вăхăта 196 пине çитнĕ. Ĕççĕрлĕхе пĕтĕмпех пĕтернĕ. Пирĕн крайра халĕ ĕççĕр çӳрекен пĕр рапођђи те çук, пире халĕ пысăк квалификкатсиллĕ рапођђисем кăна мар, квалификкатсисĕр рапођђисем те çитмеççĕ.

Халăха çутта кăларас йенĕпе те çитĕнӳсем пысăк. Пилĕк çуллăхăн йулашки çулне, 1933-мĕш çулта, 706 пин ађа вĕрентсе тăракан пулмалла шутланăђђĕ. Халĕ, 1931-мĕш çултах,—745 пин ађа вĕрентетпĕр. Крайра пирĕн 22 аслă шкул пур.

Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн крайри рапођђи класпа ĕçхалăхĕ 3 çул хушшинђе тунă ӳсĕмсем.

Пирĕн крайра калама çук пысăк çĕнĕ хапрăксавăтсем ĕçе тытăнаççĕ. 15 уйăх хушшинђе епĕр çулталăкра 140 пин авттомопил тăвакан савăт туса лартрăмăр. Тĕрлĕ стануксем, тиçĕлсем тата ытти машшинсем тăвакан сăвăтсем лартрăмăр.

Пирĕн край пысăк хапрăк-савăтлă край пулса тăрат. Край хуçалăхĕ калама çук хăвăрт ӳссе пырат. Халĕ пирĕн крайра 45-прођђăн ытла хресђенсем колхоссене пĕрлешнĕ. Совхоссем те паттăрăн вăйланса, пумайланса пыраççĕ.

Пирĕн крайра виçĕ натси авттономи. Çав натси авттономисенҫе те, крайри рапоҫҫи клас пулăшнипе, партти Крайкомĕ натси политтĕкне Ленин кăтартнă пек тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртнĕ майпе хуçалăхпа куљттур калама çук хăвăрт ўссе пыраť.

## Ҫăваш респуплĕк çĕнтерĕвĕсем.

Пĕтĕм Совет сойусĕ паттăрăн ўссе вăйланса пынă май, пирĕн край пољшевикла хăвăртлăхсемпе интустриленнĕ май, Комуниссен парттин Тĕпкомĕ, тата Крайкомпа Опком йертсе пынипе, пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕ те калама çук пысăк çĕнтерўсем турĕ. **Ҫăваш респуплĕкĕн пĕтĕм сăнсăпаҫĕ улăшрĕ.** Пысăк хапрăк-савăтлă, сотсиалисăмла пысăк йалхуçалăхлă, тата куљттурлă çул çине тухаť.

Пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе епĕр калама çук пысăк çĕнтерўсем турăмăр. Пилĕк çуллăх плана ытлашшипех пурнăçа кĕртетпĕр.

Унта та кунта та çĕнĕрен тунă пысăк савăтсем ĕçлеççĕ, пилĕк пин ытла ҫăваш рапоҫҫисем çĕнĕрен лартнă савăтсенҫе ĕçлеççĕ. 45 проҫҫăна йахăн ĕçхресҫенсем колхоссенҫе пĕрлешрĕç, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешеççĕ. Ҫăваш авттономи 12 çул тултарнă тĕле епĕр пĕтĕм респуплĕкĕпе хут пĕлекен ĕçхалăхлă пулатпăр.

Пирĕн пилĕк çуллăх план йепле пурнăçа кĕрсе пынипе ак çак ҫыхвăрсем виттĕрĕнех кăтартса параççĕ:

| | Пилĕк çуллăх план тăрăх (1929—1933 ç.) | 1929 ç. | 1930 ç. | 1931 ç. | Пилĕк çуллăх план пурнăçа, кĕпине кăтартакан % |
|---|---|---|---|---|---|
| **1. Ĕçлекенсем.** | | | | | |
| Пур рапоҫҫисемпе слушăшҫисен шуҫĕ . . . . . | 35,3 пин | 25,2 | 28,0 | 32,0 | 90,7 |
| Уйрăмăн илсен: | | | | | |
| Промышлĕннăçре ĕçлекенсем . . . | 4,0 „ | 2,2 | 4,1 | 5,5 | 137,5 |
| Хапрăк-савăтри рапоҫҫисем . . . | 3,5 „ | 1,9 | 3,4 | 4,7 | 134,3 |
| Строиттĕлстварри рапоҫҫисем . . . | 5,5 „ | 3,2 | 3,6 | 2,4 | 43,6 |
| Йалхуçалăхĕнҫи рапоҫҫисем . . | 7,0 „ | 1,7 | 1,6 | 1,5 | 85,7 |
| Вăрман касакан рапоҫҫисем . . . | — | 3,5 | 4,3 | 4,5 | |
| **2. Промышлĕннăç.** | | | | | |
| Патшалăх промышлĕннăç тăвакан протукси. . . | 42.430п.т. | 9.356,3 | 14.977,2 | 20.533,8 | 48,36 |
| Аласти промышлĕннăç тăвакан протукси. . . . | 10,2 м. т | 4,58 | 7,32 | 11,3 | 110,78 |
| **3. Йалхуçалăхĕ.** | | | | | |
| Акакан çĕр талкăш. . . . . | 603,75 п. | 552,1 | 585,9 | 604,5 | 100,14 |

| | Пилĕк çуллăх план тăрăх (1929—1933 ç.) | 1929 ç. | 1930 ç | 1931 ç. | Пилĕк çуллăх план пурнăçа кĕнине кăтартакан % |
|---|---|---|---|---|---|
| Вăл шутран: | | | | | |
| Совхоссенҫе . . . | — | 0,6 | 2,1 | 2,4 | — |
| Колхоссенҫе. . . | — | 4,2 | 41,1 | 119,5 | — |
| Тĕш тыр акни . | 450,4 пин | 503,8 | 535,0 | 515,5 | 114,44 |
| Технĕк куљттурĕ | 21,13 „ | 10,38 | 7,6 | 15,3 | 71,94 |
| Акнă курăк . . . | 75,47 „ | 7,3 | 8,2 | 26,9 | 35,56 |
| Ĕне выљăх . . | — | 258,8 | 210,3 | 220,6 | — |
| **4. Çуртйĕр.** | | | | | |
| Çĕнĕрен тунă çурт йĕр . . . . . . | 15,4 п. $м^2$ | 0,8 | 3,8 | 20,6 | 133,1 |
| **5. Куљттурă ĕçĕ** | | | | | |
| Кĕçĕн шкулсенҫе вĕрентесси . | 90,3 п. аҫа | 81,0 | 95,6 | 101,2 | 112,1 |
| Хут пĕлменнисене вĕрентесси. . . | 29,8 п. ç. | 13,3 | 67,1 | 131,9 | 442,6 |
| Аслă шкулсенҫе | 0,1 „ „ | — | 0,1 | 0,38 | 380 |
| Технĕккăмсенҫе . | 2,1 „ „ | 2,3 | 3,2 | 5,2 | 247,6 |
| Рапфаксенҫе . . | 0,3 „ „ | 0,3 | 0,37 | 1,37 | 456,7 |
| Хап. сав. вĕрен. | 0,32 „ „ | 0,37 | 0,65 | 1,9 | 593,8 |
| **Халăх сывлăхĕ.** | | | | | |
| Пуљнитсасенҫи куйккă . . . . . | 1,34 п | 0,98 | 1,0 | 1,17 | 87,3 |
| Йалсенҫе пуљнитса шуҫĕ . . | 44 | 33 | 39 | 51 | 115,9 |
| Тухтăрсем . . . | 158 | 105 | 115 | 138 | 87,3 |

Çак иртнĕ виçĕ çул хушшинҫе пĕтĕм Ҫăваш респуплĕк халăх хуçалăх тĕп строиттĕлствине панă укçа-тенкĕ икĕ хут ытла ўсрĕ: 1929-мĕш çулта 11.8961 пин панă. 1930-мĕш çулта—18.545,2 пин, 1931-мĕш çулта—23.725,5 пин тенкĕ панă. Çапла вара çав виçĕ çул хушшинҫе тĕп строиттĕлства епĕр 52 мĕлйун та 167 пин тенкĕ панă.

Çак иртнĕ виçĕ çул хушшинҫе пĕтĕм респуплĕк халăх хуçалăх протуксийĕ те çултан çулах ўссе пыҫĕ: 1929-мĕш çулта 116.398,7 пин тенкĕлĕх пулнă, 1930-мĕш çулта—126.425,4 пинлĕхе çитнĕ. 1931-мĕш çулта—141.599,3 пинлĕхе çитрĕ.

Ваккăн сутакан таварсем пилĕк çуллăх план тăрăх 1933-мĕш çулта 43 мĕлйун тенкĕлĕх пулмалла тесе йышăннă. Иртнĕ çулта—1931-мĕш çултах—вăл 52 мĕлйун тенкĕлĕхрен иртрĕ. Тепĕр май каласан пилĕк çуллăх плана виçĕ çул хушшинҫе ытлашшипех тултарнă.

Пĕтĕм халăх хуçалăх протуксинҫе сотсиалисăм пайĕ икĕ хут ытла ўсрĕ: 1929-мĕш çулта 33.574,3 пинлĕх пулнă, 1930-мĕш çулта 56.178,2 пинлĕхе çитнĕ, 1931-мĕш çулта—77.807,5 пин тенкĕлĕхе çитрĕ. Проҫҫăнпа илсен 1929-мĕш çулта—28,84 проҫҫăн пулнă, 1930-мĕш çулта—44,43 проҫҫăна çитрĕ, 1931-мĕш çулта—54,95 проҫҫăн таран ўсрĕ.

Суту-илў тăвас ĕç халĕ пĕтĕмпех сотсиалисăм хуçалăх аллинҫе.

## 1931-мĕш çулта тунă ӳсĕмсем.

Уйрăмăн, 1931-мĕш çулхи ĕççене илсен, епĕр çаксене палăртасшăн.

1931-мĕш çулта епĕр **пĕтĕм халăх хуçалăхне тĕп строиттĕлствă валђи 23 мĕлйун та 725 пин тенкĕ укçа патăмăр**, вăл упђенхи малтапхи çулпа таплаштарсан 20 прођăна йахăн маларах пулаŤ.

Промышлĕннăçри çĕнĕ строиттĕлства 9 мĕлйун та 122 пин патăмăр. Çапла вара Çĕмĕрле кăмпинатне, Куславкка савăтпе, кирпĕђ савăђĕсене тата ытти çĕнĕрен лартакан савăтсене туса пĕтерес майпа ђылайах малалла утрăмăр. 1932-мĕш çулта ĕнтĕ вĕсене пурпе те туса пĕтермелле.

Пирĕн савăтсем пĕђĕк савăтсем мар, акă сăмахран:

**1932 çул вĕçне**

| | | |
|---|---|---|
| Çĕмĕрле кăмпинађĕ . | 7850 | пин тенкĕ тăракан пулаŤ. |
| Куславкка кăмпинађĕ . | 6010 | „ „ „ „ |
| Фосфорит савăђĕ . . | 2161,8 | „ „ „ „ |
| Шупашкарти кирпĕђ савăђĕ . . . . | 772 | „ „ „ „ |
| Иванăври кирпĕђ савăђĕ | 590,5 | „ „ „ „ |
| Шуркĕсери кирпĕђ савăђĕ . . . . . | 801,7 | „ „ „ „ |
| Шуркĕсрери ђерепитсă савăђе . . . . | 448,2 | „ „ „ „ |
| Вăрман хими савăђĕ . | 370 | „ „ „ „ |

Йалхуçалăхĕнђи тĕп строиттĕлства 1931-мĕш çулта 5 мĕлйун та 300 пин тенкĕ панă. Вăл упђенхи çулпа танаштарсан—6 прођăна йахăн маларах пулаŤ.

Халăх хуçалăх тăвакан протуксийе илсен çак ӳсĕмсем курăнаççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Патшалăх промышлĕннăç протукси | 37% | ытла | ӳсрĕ |
| алăста промышлĕннăç протукси . . | 31% | ытла | ӳсрĕ |
| пĕтĕм йалхуçалăх протукси . . . | 11% | ытла | ӳсрĕ |
| совхоссен протукси . . . . . . . . | тăватă | хут | ӳсрĕ |
| колхоссен протукси . . . . . . . . | икĕ | хут | ӳсрĕ |
| пĕтĕм сотсиалисăм пайĕнђи хуçалăх протукси . . . . . . . . . . . . . . | 38% | ытла | ӳсрĕ |
| пур тара кĕрĕшсе ĕçлекенсен шуђĕ | 14% | ытла | ӳсрĕ |
| рапођђисен шуђĕ . . . . . . . . | 38% | ытла | ӳсрĕ |
| çулталăк хушшинђе ĕç укçи илни . | 14% | маларах, | |
| уйрăмăн савăтри рапођђисен ĕç укçипе илессĕц . . . . . . . . . . | 22% | ӳсрĕ | |
| строиттĕлсен . . . . . . . . . . . | 10% | хăпарнă, | |
| електритсă стантсисен вăйĕ . . . | 126% | ӳснĕ. | |

1931-мĕш çул вĕçне пирĕн колхоссенђе 108.540 хуçалăха çитрĕ, халĕ ĕнтĕ 45 прођђăн йахăн ђухăнпа вăтам хресђенсем пирĕн колхосра.

Акса усă куракан çĕр талкăшĕ—604 пин çур кектара çитрĕ, 1928-мĕш çулта вăл пирĕн 535 пин анђах пулнăђђĕ.

Нумай пусуллă уй тăвасси, курăк акасси, минерал çăнăхсемпе уйхире лайăхлатасси, ирхи çĕртме, суртлă вăрлăх, вăрлăха тасатса акасси т. ыт. халĕ ĕнтĕ оппăтсем тупă тĕлтен тахçанах тухса иртнĕ, вĕсем халĕ нумай çĕрте пĕтĕмпех ĕç йăлине кĕрсе пыраççĕ.

Алăста конператсин протуксийĕ 1929-мĕш çулта 4 мĕлйун та 580 пин тенкĕлĕх пулнă, 1930-мĕш çулта 7 мĕлйун та 320 пин тенкĕлĕхе çитнĕ, 1931-мĕш çулта 11 мĕлйун та 300 пин тенке çитрĕ. 1927-28-мĕш çулта вăл 2 мĕлйун çур ытларахлăх анђах пулнă. Пилĕк çуллăх план тăрăх

1933-мĕш çул тĕлне тин 10 мĕлйун та 200 пин тенкĕлĕхе çитет пуҁ, тенĕҁҁĕ. Çавăнпа танаштарсан епĕр иртнĕ 1931-мĕш çултах пилĕк çуллăх плана 100 проҁҁăн ытла тултартăмăр.

Алăсти копператсп ҁленĕсен хисепĕ 24.600 çынна çитрĕ, 1929-мĕш çулта—10.940 çын анҁахҁĕ. Çавăнтан шутласан алăсти копператсп çак висĕ çул хушшинҁе пкĕ хут ытла йышланҁĕ, унăн протуксийĕ висĕ хут ытла ӳсрĕ.

Куҁттур тĕлĕшĕнҁен епĕр калама çук пысăк ӳсĕмсем турăмăр. Мĕн пур кĕçĕн шкула кайма çул çитнĕ аҁасене пурне те шкулсенҁе вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртрĕмĕр. Халĕ пирĕн шкулта вĕренмени пĕр аҁа та çук. Нумайах та пулмасӑ, висĕ çул кайарах анҁах, 1928-мĕш çулта епĕр 58 проҁҁăна анҁах вĕрентме пултарнăҁҁĕ. Ку ĕнтĕ ҁăн ҁăнах питĕ паха çĕнтерӳ.

1931-мĕш çулта епĕр рапоҁҁисемпе колхоçнĕксен аҁисене тăват çул анҁах мар, пурне те çиҁĕ çул хушши вĕрентес ĕçе çирĕппĕн тытăнтăмăр. Ĕçхалăх куҁттурне хăпартас тĕлĕшре ку ĕнтĕ ҁăн ҁăнах малалли калама çук пысăк утăм. Шкулсенҁе вĕрентессипе епĕр халĕ политтехнисатси йĕркипе тăватпăр. Шкулсенҁе вĕрентессе ĕçпе çыхăнтаратпăр, çамрăк аҁасене пĕҁĕкренех пурнăçа кирлĕ ĕçсене вĕрентетпĕр.

Астаçăсене хатĕрлес майпа епĕр 2 аслă шкул уçрăмăр, тата çĕнĕрен 4 рапфак, 7—8 çĕнĕ технĕккăм, темиçе ФСУ, профшколсем уçрăмăр.

Халĕ пирĕн ҁăваш респуплĕкĕнҁе вăтамран шутласан висĕ çынтан пĕрийĕ ăçта та пулин вĕренекен пулҁĕ.

Хут пĕлменлĕхе епĕр пĕтĕмпех пĕтерсе çитеретпĕр. Пирĕн ĕнтĕ, Ђăваш автономи 12 çултултарнă çĕре, 8 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ ĕçхалăхĕ хушшинђе пĕр хут пĕлмен çын та йулмасŏ. Пĕтĕм республĕкĕпе хут пĕлекен ĕçхалăх пулаŏ. Ку ђăп ђăнах пысăк историллĕ çĕнтерӳ.

Револђтсиђђен 100 çынтан 18 çын анђах пирĕн хут пĕлнĕ. Халĕ пирĕн 100 çынтан 95 çын хут пĕлекен пулђĕç. Епĕр ђылайĕш халăхран ку тĕлĕшпе малта пыратпăр, вырăссене те хăваласа çитсе вĕсемпе пĕр утăмпа пыма вăй илтĕмĕр.

Ĕлĕк аттесемпе асаттесен вăхăтĕнђе упашкал пулассине тĕлĕкре те тĕлленмен. Револђутси пĕтĕм пурнăçа улăштарђĕ. Халĕ пурте вĕренесшĕн, ваттисем те, çамрăккисем те наукка ăслайĕсемпе усă курасшăн. Хаљхи çамрăксем вĕренессе те нумай лайăхрах вĕренеççĕ. Вĕренес тĕлĕшре тĕтĕм-сĕрĕмсене сирнĕ, пупсен ултавĕсене пĕтĕмпех сирпĕтнĕ. Халĕ пирĕн Совет шкулĕсенђе «ей, çӳлти аттемĕр» таврашсем çук, пирĕн шкулсенђе електритсă, хими, фиçĕккă, математтĕккă т. ыт. пурнăçа кирлĕ науккăсене вĕренеççĕ.

Вĕрентес тĕлĕшре пирĕн çитменлĕх çук теместпĕр епĕр. Çитменлĕхсем пирĕн ку тĕлĕшре ђылайах пур-ха, пуринђен ытла кађђăстввă йенђен çитменлĕх ђылай. Вĕсене пирĕн хăвăртрах йусамалла, вĕренекенсен пĕлӳне тата ђылай çӳлерех хăпартасшăн тăрăшмалла.

1932 ç. февраљ уйăхĕнђе пирĕн куљттур тĕлĕшпе ĕçлекенсен сйесĕ пулса иртрĕ. Вăл сйесра

уђитлĕсем, акрономсем, тухтăрсем, инщенерсем, рапођђисемпе колхоçнĕксем т. ыт. те пулђĕç. Сиес хастаррăн иртрĕ, питĕ кирлĕ решшенисем йышăнђĕ. Çав решшенисене пурнăçа кĕртсе епĕр шкулсен ĕçне тата нумай мала йама, кађђăства йенђен нумай лайăхлатма пултармалла.

Тӳрех калас пулаӗ—куљттур ĕçне тата вăйлатасси, унăн кађђăствине хăпартасси вăл—мĕн пур рапођђисемпе ĕçхресђенсен ĕçĕ. Рапођђисемпе ĕçхресђенсем вăл ĕçе хастаррăн хутшăнмасăр май çук. Çавăнпа та пирĕн советсен куљттур ĕçне, шкулсен ĕçне тата лайăхраххăн, тата хăвăртрах ӳсĕмпе йарас ĕçе мĕн пур рапођђисемпе колхоçнĕксене хутшăнтарасшăн тăрăшмалла.

Тĕрлĕ сакоттовккăсене плсен, епĕр çак иртнĕ çул хушшинђе каллех пысăк ĕçсем турăмăр.

Тырпул сакоттовкки планне . . . 101,4% тултартăмăр,
Выљăх-ђĕрлĕх сакоттовкки планне . 122,7% тултартăмăр.
Укçа-тенкĕ пухас плана та . . . . 102% тултартăмăр.

Ђылайĕш сакоттовккăсен планĕсене епĕр çак килес кунсенђе тултаратпăр. Анђах хăшпĕр сырйо планĕсене тултарасси нађар пыни те пур; сăмахран, йĕтĕн-кантăр сӳсĕ, йĕтĕнпе кантăр вăррисен планĕсем, паранкă планĕ т. ыт. те питĕ вăраххăн пыраççĕ. ›Вĕсене тултарас пирки ĕçе хăвăртрах вăйлатса йамалла. Ĕçе тăсса пыни вăл ђăрмавлă йапала. Патшалăх промышлĕнпăçне валљи кирлĕ сырйосене пирĕн çине тăрса пухмалла, сырйо пулмасан промышлĕннăç ĕçлеме пултараймасӗ, ĕçхалăхне кирлĕ таварсене туса пама пултараймасӗ.

Тырпул пухас план та пирён, çултен кăтартса пани 101,4 проҫҫăн таран пурнăçа кĕнĕ пулин те, хамăр йышăнни пĕтĕмпех тулман-ха. Çавăнпа та пирĕн тырпул пухас ĕçе нимрен те вăйсăрлатма йурамасť. Панă плана ку таранҫҫен тултарайман районсен мартăн 1-мĕшне çитиҫҫен çипе тăрсах ĕçлесе тултармалла.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç пирĕн иртнĕ çулта аван пыҫĕ теме йураť, епĕр пĕтĕм Совет сойусĕнҫе малта пыракан крайсемпе респуплĕксемпе тан пытăмăр. Анҫах халĕ те çаплах пыратпăр теме çук. Йанвар уйăхĕнҫе ҫылай районсенҫе пирĕн ку ĕç наҫарланҫĕ, февраҫ уйăхĕнҫе те ҫиперех пыманни палăраť. Çаплах пырсан йышăннă план пурнăçа кĕреймесĕр йулма пултараť. Апла хăварма май çук. Пур орканисатсисен те ку тĕлĕшпе пыракан ĕçе ҫасрах лайăхлатмалла, йышăннă плана пĕтĕмпех тултармалла.

1931-мĕш çулта епĕр тата çуйĕр таврашне лайăхлатас майпа пысăк ĕç турăмăр. Çулйĕр таврашне лайăхлатас тĕлĕшпе пирĕн пур ĕçхалăхĕ хастаррăн ĕçлерĕ. Çав майпа пирĕн çулйĕр таврашсем ҫылайах йусанҫĕç. Малашне ăна тата нумайрах йусама килет. Пирĕн респуплĕк Совет сойусĕнҫе çулйĕр тавраш йусас тĕлĕшпе ҫи малта пыраť, пирĕн оппăтсене сăнаса вăл ĕçе ытти респуплĕксене, крайсене сараççĕ.

Çапла ĕçсем, çавнашкал ўсĕмсем пулҫĕç ĕлтĕ пирĕн иртнĕ çулталăк хушшинҫе. Хуçалăх ĕçĕнҫе иртнĕ çулта епĕр пысăк оппăтсем пухрăмăр, çав оппăтсем вĕсем пире малашне тата хăвăртрах ўсĕмпе пысăк çĕнтерўсем тума пу-

лăшаççĕ. Вăл çитĕнӳсене епĕр Комуниссен партти тĕп çулйĕрне тĕрĕс тытса тăрса ĕçленипе партти тĕп çулйĕрĕнђен сылтăма йе «сулахайа» пăрнакансемпе çирĕп кĕрешнипе, клас тăшманĕсемпе паттăрăн кĕрешсе, Ленин кăтартнисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынă майпе турăмăр.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем вуçех çук теместтĕр епĕр. Çитменлĕхсем пур. Пирĕн хăшпĕр ĕçре йышăннă плансем пĕтĕмпех пурнăçа кĕрсе çитеймерĕç, ђылай пысăк прорывсем пулђĕç.

Промышлĕннăç тĕлĕшĕнђен илсен, 1931-мĕш çулхи план тăрăх çĕнĕ строиттĕлствă 9.630.000 тенкĕлĕх пулмаллађђĕ, 8.003.200 тенкĕллĕх анђах турăмăр, планпа йышăннинђен 83 прођђăн кăна пулђĕ. Ђылайĕш çĕнĕ савăтсене çав майпа вăхăтра çĕе кĕртеймерĕмĕр.

Промышлĕннăç протукси планпа йышăннă тăрăх 1931-мĕш çулта ун умĕнхи çултан—89,9 прођђăн ӳсмеллеђђĕ, 37,1 прођђăн анђах ӳсрĕ. Уйрăмах Халăх хуçалăх советђĕн (ВСНХ) промышлĕннăçĕ 122 прођђăн вырăнне 72,7 прођђăн анђах ӳсрĕ.

Тавар тума савăта хăйне ларакан хак план тăрăх 10 прођђăн йӳнелес вырăнне—1,3 прођђăн анђах йӳнелђĕ.

Ĕç тухăç план тăрăх 33 прођђăн хăпарас вырăнне 18,5 прођђăн анђах хăпарђĕ.

Ĕç укçи план тăрăх 18,6 прођђăн анђах ӳсес вырăнне—20,7 прођђăн таран ӳсрĕ.

Кађђăствă йенђен илсен тата ђылайĕш таварсен кађђăстви кирлинђен кайра тăраççĕ.

Йалхуçалăх тĕлĕшĕнђен илсен те плансем кĕ-

тĕмпех тулайман уҫаскăсем пур: колхоссенҫе пĕрлештернĕ выльăх шуҫĕ ӳсесси планран ҫылай кайарах, тырпул тухăҫĕ те сахалтарах ӳсрĕ, строиттĕлствă та планпа йышăннинҫен кайарах пулҫĕ.

Алăста промышлĕннăҫĕ те хăйĕн планне пĕтĕмпех тултарайманĕ.

Пӳтшет та пĕтĕмпех тулмарĕ, ҫентăртан илекен пулăшу пĕтĕмпех пӳтшета кĕреймерĕ.

Мĕнрен килҫĕҫ-ха ку ҫитменлĕхсем? Мĕн пирки вара плансем хăшпĕр тĕлте пурнăҫа пĕтĕмпех кĕреймерĕҫ-ха? Мĕншĕн промышлĕннăҫ планпа кăтартнă хăвăртлăхсенҫен кайарах йулнă?

Комуниссен партти Ҫăваш оркаписатсин 16-мĕш конферентсийĕ ҫапла каларĕ вăл ыйтусем ҫинҫен: «промышлĕннăҫ хăйне панă хăвăртлăхсенҫен йулса пыни тĕп сăлтавĕ вăл—Сталин йулташăн 6 условине ҫителĕклĕ таран пурнăҫа кĕртсе ҫитереймении, хуҫайҫтвĕннĕксем, вырăнти парттипе профсойус оркапнсатсисем ҫылайĕш ҫĕршывра хуҫалăхпа политтĕк улшăннă май пулнă ҫĕнĕ условисене шута илсе ĕҫе урăхлатса ҫĕнетме пĕлменни, хосрашҫута пурнăҫа паҫар кĕртсе пыни, происвотства, тата ĕҫе оркапнсатсилессинҫе пит те пысăк ҫитменлĕхсем пулни, хуҫалăха тăрлавлă пăхманни, тата промышлĕннăҫра та, строиттĕлствăра та пысăккăн сарăлнă вак пуршуаллă пĕртанлăх пулаӳ»,—тенĕ

Унтан та малалла: «Строиттĕлства вăхăтра туса ҫитерес тĕлĕшпе, кирлĕ хатĕрсем илме памалли саккассене вăхăтра вырнаҫтарас тĕлĕшпе, тата вăл хатĕрсене токăвăрсенҫе палăртнă срукcенҫе илес тĕлĕшпе хуҫайҫтвĕннĕксем кирлĕ

пек хастарлăхпа ĕçлемен (Куславккапа Çĕмĕрле кампипаҫĕсем, Шупашкарти кирпĕҫ савăҫĕ), тата илсе пынă машшинсене вăхăтра вырнаçтарас, монтташ тăвас тĕлĕшпе те кирлĕ хастарлăхпа ĕçлемен»,—тенĕ конференТси.

Малалла тата конференТси ҫукун çул транспăрҫĕ вăйсăр ĕçленине те палăртрĕ, мĕншĕн тесен çавăн пирки хатĕр протукси турттарса кайасси, тата ҫĕрĕ тавар турттарса пырасси ҫăрмавлăн пулса пынă.

Йалхуçалăхĕнҫе те, алăсти промышлĕннăçĕнҫе те, ытти хуçалăх ĕçĕнҫе те çав сăлтавсемех. Сталин йулташăн 6 условине тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыманни пур ĕçре те хăвăртлăха ҫакараҭ. Çавăнпа та ĕнтĕ, Сталин йулташăн 6 условинҫе кăтартнине ҫăп ҫăнахах пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн питĕ тим пулмалла. Ăна пурнăçа кĕртни кирек мĕнле ĕçре те пире ĕçе йусама пулăшаҭ, ĕçре полҫшевикла кирлĕ вăйхăват параҭ.

1931-мĕш çулхипе ун умĕнҫи çулсенҫе тунă ўсĕмсем пирĕн калама çук хăватлă ўсĕмсем. Çав ўсĕмпе епĕр паттăрланатпăр. Çав ўсĕмсем май епĕр ĕнтĕ малашне тата нумай мала, тата пысăкрах хăвăртлăхсемпе кайма пултаратпăр. Пилĕк çуллăх плана тăвата çултах тултарма вăй илтĕмĕр. Пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕнҫе те сотсиалисăмлă çектăр, сотсиалисăмлă хуçалăх промышлĕннăçра та, йалхуçалăхĕнҫе те мала тухса тăҫĕ.

## 1932-мĕш çулхи сатаҫсем.

Иртнĕ виçĕ çул хушшинҫе паллă çĕнтерўсем пулнă май, иртнĕ çулсенҫе пысăк вăй илнĕ май,

епĕр çак 1932-мĕш çулта тата ответлăрах сатаҫсем лартма пултаратпăр.

1932-мĕш çул ваҫҫи йышăннă хýçалăхпа куҫттур строиттĕлстви планĕ иртнĕ çулхиҫен нумай пысăкрах, сатанисем пумай ответлăрах.

Правиттĕлствă—1932-мĕш çул ваҫҫи план йышăннă ҫух, партти кăтартнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртес шутпа, пилĕк çуллăх плана тăватă çултах пурнăçа кĕртес шутпа йышăнҫĕ. Правиттĕлствă—хăй йышăннă плана пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме пултармалла тесе шанаť, пурнăçа кĕртетпĕрех тесе шанса, Тĕпĕçтăвкомăн çак çеççине ăна çирĕплетме сĕнет.

## Пĕтĕм халăх хуçалăх планĕ.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх кăçал çĕнĕрен тумалли строиттĕлствă ваҫҫи 40 мĕлйун тенкĕ укçа хывмалла. Иртнĕ çул 23 мĕлйун ытларах пулнă. Çапла вара кăçал 58,6 проҫҫăн нумайрах пулмалла.

Çак плана пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсессĕн, епĕр пилĕк çуллăх плана 104,3 проҫҫăн таран тултаратпăр. Пилĕк çуллăх план тăрăх пилĕк çул хушшинҫе 90 мĕлйун та 200 пин тенкĕлĕх тĕп строиттĕлствă тума шутланă, епĕр 4 çул хушшинҫех 94 мĕлйун та 162 пин тенкĕлĕх тăватпăр.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх—1932-мĕш çулта пĕтĕм халăх хуçалăх протукси 216 мĕлйун та 600 пин тенкĕлĕх çитмелле. Иртнĕ çулта вăл 141 мĕлйунлăх анҫах пулнă. Çапла

вара кăçал 53 процĕнтăн ÿсмелле. Пилĕк çуллăх план тăрăх вăл 1932-мĕш çулта тин 206 мĕлйун та 800 пине çитмелле пулнă. Плана тултарсан, епĕр кăçалах пилĕк çуллăх план хисепне 104,7 процĕнтăн таран тултаратпăр.

Пĕтĕм ваккăн сутакан таварсем 1932-мĕш çулта 85 мĕлйун тенкĕлĕхе çитмелле Иртнĕ çулта вăл—52 мĕлйун анĕах пулнă, çапла вара кăçал 62,5 процĕнтăн ÿсмелле. Пилĕк çуллăх план тăрăх 1933-мĕш çул тĕлне те 43,1 мĕлйуна анĕах çитмелле пулнă, унтан шутласан епĕр пилĕк çуллăх плана кăçалах, тăваттăмĕш çулĕенех, 197,2 процĕнтлăх тултаратпăр.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх 1932-мĕш çулта сотсиалисăмла хуçалăх пĕтĕм хăлăх хуçалăх тăвакан протуксинĕен 78,7 процĕнтне тăвакан пулмалла. Тепĕр май каласан — 5 пайран 4 пайне сотсиалисăмлă хуçалăх тăвакан пулмалла. Иртнĕ çулта 54,9 процĕнтăн анĕах пулнă вăл пирĕн. Кăçал 170 мĕлйун та 400 пинлĕх сотсиалисăм хуçалăхĕ протукси памалла, иртнĕ çул—77 мĕлйун та 800 пинлĕх анĕах пулнă. Пилĕк çуллăх план тăрăх 1933-мĕш çул тĕлне те 90 мĕлйун та 300 пинлĕх анĕах пулмалла пулнă, унтан шутласан епĕр кăçалах вăл хисепе 188,7 процĕнтăн тултаратпăр.

Суту-илÿ йенĕен илсен—кăçал пĕтĕмпех патшалăхпа копператсия аллинĕе пулмалла, ĕаçтниксепе пĕтĕмпех пĕтерсе лартмалла.

Çавнашкал паттăр ÿсĕмсем тумалла пирĕн кăçал. Вăл ÿсĕмсене тăватпăрах, вăл ÿсĕмсене тума пирĕн вăй çитет.

## Промышлёнпăçпа електритсă.

Хуçалăхри уйрăм пайсене, уйрăм уђаскăсене илсе пăхсан пирĕн ак çакнашкал ĕçсем пулмалла:

Халăх хуçалăхĕн аслă канăшĕне снапшени кăмиссариађĕ аллинђе тăракан промышлĕннăçа тĕп строиттĕлстввă тума—11 мĕлйун та 982 пин—12 мĕлйун йахăн—памалла. Çапла туниле вара кăçал иртнĕ çулхинђен 31,3 прођђăн маларах пулмалла. Вăл шутран халăх хуçалăхĕн аслă канаш (ВСНХ) промышлĕннăçпе 11 мĕлйун та 157 пин, иртнĕ çулхинђен 28,8 прођђăн ўстерсе памалла, снапшени кăмиссариађĕн промышлĕннăçне 825 пин, иртнĕ çулхинђен 145,5 прођђăн ўстерсе памалла.

Çав укçа-тенкĕпе кăçал çак ĕçсене тумалла:

1. Шупашкарта çĕнĕрен тимĕр-тăмăртан тунă йапала таврашне йусама пултаракан савăт лартмалла. Вăл савăтра çулталăкра 1500 тоннă тимĕр шăратакан ђех пулмалла, промышлĕннăçри тата йалхуçалăхĕнђи машшинсене йусакан пысăк ђех пулмалла. Унта 450 рапођђи ĕçлекеп пулмалла. Ăна вађђи 800 пин тенкĕ памалла.

2. Иванăвă патĕнђе, Шупашкар районĕнђе, 500 тоннă краскă тăвакан савăт лартмалла. Ăна вађђи—150 пин панă.

3. Пуйински расйес патĕнђе слантсă кăларакан рутник тумалла, ăна вађђи—500 пин памалла.

4. Шупашкарта çĕнĕрен пысăк типокрафи туса лартмалла, ăна вађђи—1 мĕлйун тенкĕ памалла.

5. Çĕмĕрле кăмпинатĕнђе стољарни ђехпа авнă пукансем тăвакан ђехе туса пĕтермелле, тата рапођђисем ваљђи пурăнмалли çуртсем т. ыт. те тумалла, ăпа ваљђи—3 мĕлйун та 500 пин памалла.

6. Куславкка кăмпинатĕнђе електритсă стантси çуртсем тăвакан ђех тата ыттисене туса пĕтермелле, ăна ваљђи—1 мĕлйун та 310 пин памалла.

7. Хăма çуракан кив савăтсене çĕнетме—490 пин тенкĕ памалла.

8. Толкопољанри вăрман хими савăтне çĕнетме 100 пин памалла.

9. Вăрнарти фосфорит савăтне пысăклатма 400 пин тенкĕ памалла.

10. Çĕмĕрлери «Большевик» савăтне пысăклатма 540 пин тенкĕ памалла.

11. Çĕпĕрен тăвакан 3 кирпĕђ савăђĕсене тата ђерепитсă савăтне туса пĕтерме, унтан тата треппĕл кăларма 687 пин памалла.

12. Шупашкарти тир савăтне йусаса аслатма 40 пин тенкĕ памалла.

13. Шупашкарти йăвăç ĕç тăвакан савăта пысăклатма тата строиттĕлсене ваљђи çуртсем туса пама—460 пин памалла.

14. Çпирт савăђĕсене йусама—311 пин çурă памалла.

15. Шупашкарти ерех савăтне йусама—23 пин çурă памалла.

16. Йетĕрнери çу савăтне йусама—15 пин памалла.

17. Кĕçĕн Йелђĕкре крахмал савăђĕ тума, та-

та ытти 2 савăта туса пĕтерме—475 пин тенкĕ памалла.

Паллах ĕнтĕ, çак кăтартнă стройккăсене тăвасси вăл писăк ответлă ĕç. Пирĕн ку тĕлĕшре хаљ çитмĕнлĕхсем ђылай-ха, вĕсене пĕтĕмпех пĕтерес пулаť. Строиттĕлствăра машшинсемпе пумайрах усă курма тăрăшас пулаť, ĕçе йĕркеллĕрех тума, кађђăствă йенђен лайăхрах тума тăрăшмалла.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх пирĕн патшалăх промышлĕннăçĕн протуксийĕ 1931-мĕш çулпа танаштарсан—114,2 прођ. ÿсмелле, ку хисепрен Халăх хуçалăхĕн аслă канашĕ аллинђе тăракан промышлĕннăç тăрăх 120,4 прођђăн, Снаппени кăмиссариађĕ промышлĕннăçĕнђе—89,7 прођ. таран ÿсмелле. Çапла вара пилĕк çуллăх плана епĕр кăçалах 103,8 прођђăн таран тултаратпăр.

Уйрăм протуксине илсен, çакнашкал сатанийе тултармалла: çурнă хăма—358 пин куп, кирпĕђ—52 мĕлйун штук, çуртйĕр—350 пин тăваткăл меттăр, йăвăç тăрписем—400 пин меттăр, паркет—54 пин таваткăл меттăр, йĕтĕнпе кантăр çу—3.800 тоннă, фосфорин çăнăхĕ—42 пин тоннă, хура тир тумалли екстракт 3000 тоннă, çпирт 305 пин текалиттăр, крахмал 3066 тоннă тата ыт. те.

Çак сатанисене пурне те пирĕн промышлĕннăçăн кăçал тултармалла. Вĕсене тултарасшăн пур рапођђисен те питĕ пикенсе ĕçлемелле.

1932-мĕш çулта пирĕн електритсă стантсисен вăйне—5560 киловата çитермелле, вĕсем тăва-

кан енеркине 28 мĕлйун киловат-сехете çитермелле. Иртнĕ çул вăл 18 мĕлйун анҫах пулнă, кăçал 10 мĕлйун хушмалла.

Патшалăх промышлĕннăçĕнҫе ĕçлекен проиcвотствăллă рапоҫҫисен йышне (хисепне)—51,4 проҫҫăн таран ӳстермелле. Халĕ пирĕн хапрăксавăтсенҫе 5500 рапоҫҫи, кăçал—7.100 çынна çитмелле, вăл шутран 75 проҫҫăн ҫăваш, 35 проҫҫăн хĕрарăм пулмалла. Халĕ пирĕн савăтсенҫе ҫăваш рапоҫҫисем 46, хĕрарăмсем 15—16 проҫҫăн анҫах. Çавăнпа та планпа йышăннă пек ҫăваш раппоҫҫисен йышне хутшăнтарас тесен, пирĕн кăçал питĕ тимлĕн ĕçлеме тивет.

Рапоҫҫисен ĕç тухăçĕ, вăтамăн илсен, 1932-ш çулта 21 проҫҫăн ӳсмелле.

Протукси тума савăта хăйне ларакан хака 7 проҫҫăн ҫакармалла, çав вăхăтрах протукси пахалăхне (каҫҫăствине) лайăхлатмалла.

Промышлĕннăç строиттĕлствин хăйне ларакан хакне—10 проҫҫăн таран йӳнетмелле.

Вăрман касса хатĕрлесси те ҫылай ӳсмелле, 1932-мĕш çулта 2.163 пин куп хатĕрлемелле. Вăрман ĕçĕнҫе пирĕн çак иртнĕ йанвар уйăхĕнҫе ĕçсем наҫар пыҫĕç. Каплах пырсан план тулас çук. Плана тултармасăр хăварма май çук, ăна пĕтĕмпех тултармалла. Плана тултармасан, строиттĕлствă вăхăтра кирлĕ таран йăвăç маттерйал илеймесĕр тăрса йулма пултарать. Çавăнпа та пирĕн вăрман ĕçне питĕ хĕрӳллĕ тытăнмалла, хăвăртрах йанвар уйăхĕнҫе пулнă прорывсене пĕтерсе, плана пĕтĕмпех тултармашкăн кĕрешмелле. Пуринҫен ытла каснă вăрмана вăрман-

тан кăларас ĕç наҫар пырать. Çавăнпа та пирĕн ун çине тимлĕрех пăхас пулать.

Апла та капла приҫҫинсем тупасшăн хăшпĕрисем, хăйсем «тăм-шăхлиҫ»каласах вăхăт иртерессĕ. «Тăм-шăхлиҫ» калама вăхăт çук хаҫ, йулташсем, çапна тавăрса, çурăм çине тар тухиҫҫен ĕçлес пулать хаҫ.

Кăçалхи çул пирĕн тата хамăр çĕршыври пурлăхсене питĕ тимлĕн шыраса тупса сăнас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле. Пирĕн çĕршыв пуйан çĕршыв. Пирĕн çĕр айĕнҫе темĕн ҫул хаклă йапаласем пур. Пирĕн Йĕпреç, Патăрйел, Шăмăршă, Улатăр, Пăраҫкав, Вăрнар районĕсенҫе 1 мĕлйарт та 300 мĕлйун тоннă слантсă, 1 мĕлйарт та 250 мĕлйун тоннă фосфорит пур. Слантси те, фосфориҫĕ те пирĕн промышлĕннăç валъҫи паха сырйо вырăнне шутланаççĕ.

Улатăр, Пăраҫкав, тата Кĕçĕн Йелҫĕк районĕтимĕр тăпри пур.

Улатăр Пăраҫкав тата Кĕçĕн-Йелҫĕк районĕсенҫе треппĕл текен йапала темĕн ҫухлĕ пур.

Хăшпĕр районсенҫе кипс текен йапала пур. Ҫылай çĕрте пирĕн çернăй колҫетан пур, пăхăр та пур теççĕ пирĕн.

Вăрмар, Йĕпреç, Патăрйел, Пăраҫкав районĕсенҫе темĕн ҫухлĕ ҫемĕнт тума йурăхлă исвĕç пур.

Краскă тума йурăхлă тăм, алюмини тума йурăхлă тăм, тĕрлĕ строиттĕлствăри кирлĕ маттерйалсем тума йурăхлă тăм темĕн ҫухлĕ те пирĕн.

Каптăк тума йурăхлă хăйăр пур. Пирĕн темĕн ҫухлĕ строиттĕлства кирлĕ ҫулсем пур.

Пĕр каласан, пирĕн çĕршывра лайăх шырасан темĕн те тупма пулĕ.

Анђах çав пурлăхсене епĕр халĕ нумайĕшне пĕлместпĕр-ха, хамăр çĕршыври пурлăхсене шыраса тупса промышлĕннăç ўстерсе йарас майне сахал ĕçлетпĕр-ха.

Халĕ правиттĕлствă çĕпĕ пилĕк çуллăх план тăвать. Килес çултан пуçăнса епĕр çĕпĕ пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртме тытăнмалла. Ун çинђен кайран каласа кăтартăп-ха. Халĕ епĕ çакна каласшăн: пирĕн çĕнĕ пилĕк çуллăх плана мĕн пур çĕршыври пурлăха сырйо туса, промышлĕннăçа калама çук вăйлă хăватлантарас майпа тумалла.

Çапла тăвас тесен пирĕн хаљ хамăр çĕршыври пурлăха тĕплĕн сăнаса палăртмалла. Вăл ĕçе нĕр инçтитут анђах туса çитерес çук. Пирĕн вăл тĕлĕшпе инçтитуђĕ те тимлех ĕçлемест-ха. Вăл ĕçе мĕн пур ĕçхалăхĕн тытăнмалла. Мĕн пур ĕçхалăхĕ тытăнсан тин епĕр хамăр çĕршыври мĕн пур пурлăха çителĕклĕ пĕлекен пулма пултаратпăр. Çак ĕç вăл питĕ пархатарлă, питĕ усăллă ĕç. Вăл пирĕн пĕтĕм хуçалăха, пĕтĕм пурнăçа вăйлатса йама пултарать.

Пирĕн кăçал калама çук пысăк, исторйллĕ ĕçсем тума тытăнмалла. Атăл шывпе пĕвелесе тĕнђере унашкал сахал пысăк електритсă стантси тума тытăнмалла. Вăл май тата 10 мĕлйунлăх ытла ĕçсем пулмалла, вăл май Канашпа Шупашкар хушшине ђукун çул туса лартмалла.

Кусем çинђен пăртак варарах калăпăр. Халĕ çакна калăпăр: пирĕн промышлĕннăç умĕнђе

1932-мӗш ҫулта калама ҫук пысӑк сатаҫсем тӑраҫҫӗ. Вӗсене пурнӑҫа кӗртесшӗн пирӗн, пӗтӗм респуплӗкри ӗҫхалӑхӗн хастаррӑн ӗҫлемелле, пӗтӗм ҫӗререн тӑрӑшса кӗрӗшмелле.

## Йалхуҫалӑх.

Йалхуҫалӑхӗнҫе 1932-мӗш ҫулта пирӗн тӗп сатаҫ вӑл—колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнҫен ҫирӗплетесси. Колхоссен тӗп форми халҫхи тапхӑрта йалхуҫалӑх ертелӗ пулаӳ, ҫавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн йалхуҫалӑх ертел уставне тӗплӗн пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшмалла. Ҫавӑн майне сотсиалисӑм йӗркипе пырса колхоссенҫе вылҫӑх-ҫӗрлӗх нумайрах ӗрҫетесшӗн, таварлӑх сӗт-ҫу тӑвакан фермӑсене, таварлӑх сысна усракан фермӑсене т. ыт. те сармалла. Унтан тата тырпул тухӑҫне хӑпартасшӑн пит тим кӗрешмелле. Ҫапла колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнҫен ҫирӗплетсе пырса, ҫухӑнпа вӑтам хресҫенсене колхоссене пӗрлештересшӗн, партти Тӗп комиттеҫӗ кӑтартнӑ йӗркепе колхос йухӑмне вӑйлатасшӑн тӑрӑшмалла.

Халӗ пирӗн 44 проҫҫӑн хресҫен хуҫалӑхӗсем колхосра. 100 хуҫалӑхран — 44-ӗш колхосра. Ку таранҫҫенхи ӳсӗмсене шута илсе пӑхса, ку таранҫҫенхи пулнӑ колхос йухӑмне шайа илсе шутласа—пирӗн респуплӗкре ҫак 1932-мӗш ҫул вӗҫнелле колхоса кӗнӗ хресҫенсен шуҫӗ—60 проҫҫӑна ҫитет пуҫ тесе шутлатпӑр епӗр правиттӗлствӑра. Ҫак майпа вара ҫураки тӗлнеллех 50 проҫҫӑнран иртес пек туйӑнаӳ.

Паллах ёнтĕ—колхос йухăмне вăйлатса пырасси вăл—хăйне хăй шуса пырас йапала мар. Самотёокпа пулас ĕç мар. Икĕ алла кăкăр çине хĕреслесе ларса, çăвара кукăр ђĕлĕм хыпса пак-пак тутаркаласа, сулахай ура урлă сылтăм урине хурса усса ларнипе пулмасť ёнтĕ вăл колхос. Урам тăрăх тăм-шăхлиђ каласа çӳреннипе пулмасť вăл колхос. Колхос йухăмне вăйлатма ăна колхоссене оркаписсасипе хуçалăх йенђен çирĕплетесшĕн питĕ тимлĕ, калама çук хастаррăн ĕçлемелле. Колхосри пур ĕçсене те вăхăтра, йĕркеллĕ туса пырассишĕн, пур ĕçе те тĕрĕс шута илессишĕн, колхос тупăшĕсене тĕрĕс валеçесшĕн кĕрешмелле.

Колхоссене оркаписсатсипе хуçалăх йенђен çирĕплетес тĕлте—ĕçе лайăх йĕркелени тĕп вырăнта тăраť. Çав майпа прикатăсем тăвасси, вĕсене йертсе пыма толккăллă прикатирсем хатĕрлесси, прикатăсене çу каçиђђенех уйрăм, хăйсене тĕллесе панă уђаскăра ĕçлемелле тăвасси—ђи кирлĕ ĕçсем пулаççĕ. Совет сойусĕн VI сиесĕн решшенисене—çтелшђĕнă майĕпе ĕçлемеллине, ĕç уђђотне лайăхлатассине, ĕçкунĕ йĕркипе ĕçе кађђăствă йенђен пăхса пахалассине—пурнăçа кĕртессишĕн тим тăрăшмалла.

Колхос ӳсĕмне пирĕн малалла йамалла. Анђах пирĕн халђхи тапхăрта йалхуçалăхĕнђе ђылай хресђен уйрăм хуçалăхпа пурăннипе манма йурамасť. Уйрăм хуçалăхпа пурнакан ђухăнпа вăтам хресђенсене пирĕн хăвăртрах колхоса кĕме пулăшмалла, нушалăх çулĕ çинђен хăвăртрах колхос çулĕ çине кăларасшăн тăрăшмалла.

Колхоса кӗрес ӗҫ вӑл—прӗклӗ ӗҫ. Колхоса вӑйпа кӗртмеҫҫӗ, колхоса кулаксене тархасласан та кӗртмеҫҫӗ. Апҫах ку тарапҫҫен туртӑнкаласа тӑракан ҫухӑнпа вӑтамсене пирӗн татах Сталин йулташ сӑмахсене тӗплӗн каласа тӑнлантарма тӑрӑшмалла.

Сталин йулташ калапӑ: «Колхос хресҫенсене ҫухӑнлӑхран хӑтарас тӗлӗшпе пӗртен пӗр меслет пулаӗ»,—тенӗ.

Виҫӗмҫул колхоҫнӗксене панӑ ответра Сталин йулташ колхосран тухакансем ҫинҫен ҫапла каланӑ: «Вӗсем лайӑх тумаҫҫӗ: колхоссенҫеп кайалла тухпипе вӗсем хӑйсен интересӗсене хирӗҫех пыраҫҫӗ, мӗншӗн тесен колхоссем апҫах хресҫенсене ҫухӑнлӑхран, тӗттӗмлӗхрен тухма май параҫҫӗ. Колхоссенҫеп кайалла тухпипе вӗсем хӑйсене йапӑх условисене лартаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем совет влаҫӗ колхоссене паракан ҫӑмӑллӑхсемпе, лҫкоттӑсемпе усӑ курассипҫен пӑрӑнса йулаҫҫӗ»,—тенӗ.

Ленин каланӑ: «Вак хуҫалӑхпа пушталӑхран тухас ҫук» (16 т., 378 стр.).

«Епӗр ӗлӗкхи пекех вак хуҫалӑхсенҫе ларсан, ирӗк ҫӗр ҫинҫе ирӗклӗ граштӑнсем пулсан та, ҫавах пӗтсе ларас хӑрушлӑх умӗнҫе тӑратпӑр» (14 т., 1 п., 169 стр.).

Ленин каланӑ: «Ушкӑнла ертелленсе, йулташланса ӗҫленипе апҫах империалисӑм вӑрҫи пире хуса кӗртнӗ ҫӑтлӑхран тухма май пур» (16 т., 375 стр.).

«Шултра, кӑтартуллӑ хуҫалӑхсенҫе пӗрлешсе ӗҫлеме тытӑнмалла, мӗншӗн тесен унсӑрӑн ҫав

тери хуҫалӑх наҫарланнинҫен, ҫав тери ҫӑтма май ҫук Раҫҫей условисенҫен тухма ҫук» (14 т., 1 п., 169 стр.).

Ҫакӑ пӗтӗмпе мӗне пӗлтерет?

Вӑл—хресҫенсене тӗттӗмлӗхрен тухма паракан майсем пӗртен пӗр колхоссем анҫах пулнине пӗлтерет.

Ленин калаҫ: «Совет влаҫӗ комунсемпе йулташлӑхсене пирвайхи вырӑна хурса тӳрех ытларах хисеплет» (15 т., 518 стр.).

Ку мӗне пӗлтерет?

Вӑл совет влаҫӗ колхоссене ҫкоттӑсем парассине, уйрӑм хуҫалӑхсенҫен ытларах хисеплессине пӗлтерет. Вӑл ӗнтӗ колхоссене ҫӗр парас йенҫен те, машшинсем, трактӑрсем тӑратас йенҫен те т. ыт. налок хурассине ҫӑмӑллатса та, кивҫенлӗх йенҫен те колхоссене ҫӑмӑллӑхсем парассине пӗлтерет.

Совет влаҫӗ мӗншӗн-ха колхоссене ҫкоттӑсем параҫ, ытларах хисеплет?

«Мӗншӗн тесен колхоссене ытларах пулӑшни—ҫухӑнсемпе вӑтамсене пулӑшпин ҫи тивӗҫлӗ формипулса тӑраҫ»,—тет Сталин йулташ.

Колхос тӑвас ӗҫре кулак пиҫӗн ҫи пысӑк тӑшман. Кулак вӑл совет влаҫӗн тӑшманӗ. Пирӗн унпа килӗшӳ ҫук, пулма та пултараймасҫ.

Акӑ мӗн калаҫ Ленин кулак ҫинҫен:

«Кулаксем—ҫи хайар, ҫи усал, ҫи тискер експлоаттаттӑрсем. Вӗсем историре ытти патшалӑри ҫӗршывсенҫе пӗрре ҫеҫ мар помешҫӗксен, патшасен, пупсен, кӑпиталиссен влаҫне кӳнӗ. Кулаксем помешҫӗксемпе кӑпиталиссенҫен те ыт-

ларах. Анҫах халăх хушшинҫе кулаксем сахаллăн... Ҫак ҫын йунне ĕмекенсем вăрҫă вăхăтĕнҫе халăх нушипеле пуйрĕҫ, тырă тата ытти протуктăсен хакне те ўстерсе вĕсем пин, темиҫе ҫĕр пин тенкĕ укҫа пухнă. Ҫак ерешменсем вăрҫăпа паҫарланнă хресҫенсен, тата выҫă рапоҫҫисен шуҫĕпе мăнтăрланса пынă. Вăл сĕлĕхсем (пийавккăсем) ĕҫхалăх йунне ĕҫпĕ, хулара, тата хапрăкра рапоҫҫисем мĕн ҫухлĕ выҫăхса пуранна, ҫавăн ҫухлĕ вĕсем пуйапланса пынă. Ҫав йун ĕҫекенсем хăйсен аллипе улпутсен ҫĕрĕсене илнĕ, илеҫҫĕ те, вĕсем каллех ҫухăн хресҫенсене пусмăрлаҫҫĕ» (20 т., 2 п., 257 стр.).

«Епĕр ҫав йун ĕҫекен ерешменсене вĕсен експлоаттатсиллĕ туртăмне хĕссе, карталаса пырас политтĕке тытнипе ҫăтса тăтăмăр, ҫăтнă, мĕншĕн тесен, кулак хуҫалăхĕпе кулак происвотствине нимĕнпе те улăштарма ҫук пулнă, халĕ епĕр вĕсен хуҫалăхĕсем выранне колхоссемпе совхоссен хуҫалăхĕсене тăратма пултаратпăр. Ҫав ерешменсемпе йун ĕҫекенсене малашне те ҫăтма кирлĕ мар. Колхоссене тĕртсе ҫунтаракан, колхос ĕҫĕнҫи хастарлă ĕҫлекен йулташсене вĕлерекен, акана пăсма хăтланакан йун ĕҫекенсемпе ерешменсене малашне те ҫатни—рапоҫҫисемпе хресҫенсен интересне хирĕҫ пыни пулаĭ. Ҫавăнпа та, кулаксене класĕпех пĕтерес политтĕке ҫине тăрса куллен кун, поҫшевиксем анҫах пултаракан вăйпа, пурнăҫа кĕртсе пымалла»—тет Сталин йулташ.

Ҫав майсемпе епĕр ҫăваш патракĕсене, ҫухăнпа вăтам хресҫенсене пĕр туртăнса тăмасăр

ҫӗнӗ ҫул ҫине, сотсиализсӑм ҫулӗ ҫине ҫасрах тухма ҫӗнетпӗр.

Кулаксен класне епӗр, ҫухӑнпа вӑтамсем пурте колхоса кӗнӗ май, пӗтерсех пыратпӑр. Анҫах, кулак пӗтнӗ, пирӗн кулакран хӑрамалли ҫук тени вӑл пӗре те тӗрӗс мар. Кулак вӑл тискерленнӗҫемӗн тискерленсе пырать, ҫӗлен пек сӑхасшӑн ҫӳрет. Кулак халӗ ҫейеленсе ҫитрӗ. Куҫа кӗретенех хӑтланмасть, вӑрттӑн, ҫӗрлехи тискер кайӑк манерлӗ пулса кӗрешет. Кулак кӗрешӗвӗсем ҫине халӗ тинкererex пӑхмалла, тинкерсе пӑхмасан вӑл пысӑк суран тума пултарать. Кулаксен кӗрешӗвӗсенҫе халӗ меттӑтсем те улӑшнӑ, кулаксем халӗ вӑрттӑн ӗҫлеҫҫӗ, вӑрттӑн ӗҫлесе колхоссене ӑшӗнҫен ҫӗмӗресшӗн тапӑҫаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та клас кӗрешӳнҫе пирӗн питӗ ҫивӗҫ пулмалла.

Ҫапла сатаҫсем тӑраҫҫӗ ӗнтӗ пирӗн 1932-мӗш ҫулта колхоссем тӑвас ӗҫре.

Правиттӗлствӑ йышӑннӑ план тӑрӑх акакан ҫӗр талкӑшӗ 1932-мӗш ҫулта пирӗн—630.119 кектар таран ӳсмелле, вӑл шутран тӗш тырӑ—501.069 кектар, паранкӑ—65.000 кектар, пахҫа ҫимӗҫ—6000 кектар.

Ҫак ҫуркунне совхоссенҫе 7.316 кектар акмалла, иртнӗ ҫулта вӗсен 2.406 кектар анҫах пулнӑ. Колхоссенҫе 351.945 кектар акмалла, иртнӗ ҫулта 119.440 кектар пулнӑ. Ҫапла вара ҫак ҫуркунне совхоссемпе колхоссем акнӑ ҫӗр—56,5 проҫҫӑна ҫитет.

Правиттӗлствӑ тата тырпул тухӑҫне хӑпартас тӗлӗшпе ҫапла сатаниҫсем йышӑннӑ: пӗр кек-

тар çинҫе тĕш тырă 9,1 ҫентнĕр, йĕтĕн вăрри—4 ҫентнĕр, йĕтĕн сӳсĕ—3 ҫентнĕр, паранкă 90 ҫентнĕртен кайа мар тумалла йышăннă.

Паллах ĕнтĕ çав таран тырпул тухăçне хăпартма пирĕн акрономи наукки кăтартнине тимлĕрех пурнăçа кĕртме тивет. Навуспа, тĕрлĕ утопренисемпе лайăхрах усă курмалла, ака таврашне тирпейлĕ тумалла, вăрлăхсене тасатса акмалла, мĕнпур суртлă вăрлăха акмалла, унтан тата çум таврашĕсемпе тимлĕн кĕрешмелле.

Тырпул тухăçĕ хăпарнă май вара пирĕн 1932-мĕш çулта—тĕш тыр—455.796 тоннă, йĕтĕнпе кантăр вăрри—7.300 тоннă, йĕтĕнпе кантăр сӳсĕ 5.705 тоннă, паранкă—58.500 тоннă тумалла.

Пирĕн йалхуçалăхĕ ку таранҫҫен те питĕ пысăк хăвăртлăхсемпе машшинланҫĕ. Кăçал тата пысăк ӳсĕмсем тумалла. Кăçал пирĕн респуплĕкре тата çĕнĕрен 8 машшинпа трактăр стантси уçăлмалла.

Вара пирĕн 12 МТС пулаť, вĕсенҫе 369 трактăр пулмалла. Çав трактăрсемпе епĕр вара пур районсене те пекех çураçтарма пултаратпăр.

Трактăрсемсĕр пуçне тата 3 мĕлйун тенкĕлĕх ытти йалхуçалăх машшинĕсем кӳмелле.

Унсăр пуçне тата 914 тоннă суперфосфат, 510 тоннă кали тăварĕ, 2.440 тоннă фосфорит çăнăхĕ кӳмелле, 1200 кектар исвĕçне йусамалла.

Машшинпа трактăр стантсисем çурхи акара 60 пин кектар çинҫе ĕçлемелле, пĕлтĕр 24 пин çинҫе анҫах ĕçленĕ пулнă.

Çакнашкал ӳсĕмсем пулмалла ĕнтĕ пирĕн йалхуçалăхне машшинлатас тĕлĕшпе.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх пирĕн кăçал совхоссенче ĕне выльăх 1.490 пуçа çитмелле, иртнĕ çулта 340 пулнă; сысна—2000 пуçа çитмелле, вăл—240 анчах пулнă.

Совхоссен кăçал патшалăха 28,9 тоннă тавар аш (какай), 256 тоннă сĕт памалла.

Колхоссенче пĕрлештернĕ ĕне выльăх 13.000 пуçа çитмелле, иртнĕ çулта вăл 3.480 анчах пулнă, вăл шутран 6700 ĕне фермисенче пулмалла; сысна выльăх—36.000 пуçа çитмелле, иртнĕ çул—9.560 анчах пулнă вăл, çав шутран 8.000 пуçĕ сысна фермисенче пулмалла.

Колхоссен сĕт фермисен патшалăха—2.500 тоннă сĕт, 260 тоннă аш (какай) памалла.

Колхоссен фермисем çинчен епĕ çакна палăртса хăварасшăн. Хăшпĕр колхоссенче выльăхсене тăрлавлă пăхманни пур пирĕн: «ман-и мĕн вăл» текеленисем илтĕнкелеççĕ. Апла йуравлă ĕç мар вăл. Пĕрлештернĕ выльăх, йе фермăри выльăх пĕтĕмпех колхоçнĕксен вĕсем, çавăнпа та йут выльăх çине пăхнă пек пăхма йурамасть. Выльăха чипер пăхни кирлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшре пирĕн выльăх апачĕ çителĕклех пулманни чылай чăрмантарать. Çавăнпа та выльăх апач нумайрах тăвасси çине пирĕн тимлĕрех пăхма тăрăшмалла. Çав шутпа правиттĕлствă кăçал акнă курăк 52.000 кектара çитерме йышăнчĕ, унсăр пуçне тата 3.000 кектар çилос тума йурăхлă культтурсем акмалла. Кăçал 90.000 тоннă çилос тумалла. Çаксене пурнăçа кĕртсен вара выльăх апачĕ йенчен епĕр вуçех аптрами пулатпăр.

Йалхуçалăхне тĕп строиттĕлствă валӑҗи кăçал 8 мĕлйун та 800 пин тенкĕ пама йышăнчă, вăл шутран совхоссене 1 мĕлйун та 438 пин, колхоссемпе МТС—7 мĕлйун та 362 пин памалла.

Çак укçа-тенкĕпе җипĕр усă курма тăрăшмалла, укçа-тенке тирпейлĕрех тыткаламалла, усăсăр çĕре йарса пĕтересрен сыхламалла.

## Транспăртпа çыхăну.

Кăçал пирĕн респуплĕкри җукунçулсем çинҗе те пысăк ĕçсем пулмалла.. Җукунçул çинҗи строиттĕлствăна 959 пин тенкĕ памалла, çав шутран 250 пин Канашра ваксал тума йамалла, 526 пин Канаш стантсине пысăклатма йамалла.

Ку шута Шупашкарпа Канаш хушшинҗе çĕпĕ җукунçул тăвас майпа тумалли расхотсем кĕмеççĕ. Кăçал вăл җукунçула тăватпăрах пуӑ тесе шанатпăр епĕр, мĕншĕн тесен, ăна тумасăр Атăл çинҗе китростантси тăвас ĕç пулма пултараймасӑ. Вăл җукунçула тума 6 мĕлйун ытла расхут тухмалла.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх пирĕн кăçал тата çĕнĕрен 176 çĕнĕ авттомопил илмелле, çапла вара кăçал пирĕн 200 машшинтан иртмелле.

Кăçал пирĕн шыв çинҗи транспăрт та җылайах лайăхланмалла, ăна тĕп строиттĕлствă валӑҗи 565 пин тенкĕ памалла, вăл укçапа пуринҗен ытла пристăнҗсенҗи хуçалăха йĕркелемелле, унтан тата çĕнĕ паршăсем тумалла.

Шупашкарта кăçал аеротром тумалла, йе-

роплансен (сывлăш карапĕсен) стантси пулаť вăл. Ăна тума 75 пин тухмалла.

Çулйĕр тавраш лайăхлатма 4 мĕлйун та 148 пин расхут тухмалла, пĕлтĕр 3 мĕлйун çурă тухнă, вăл шутран 2 мĕлйун çурлăх ĕçхалăхĕ ĕçлесе тултармалла. Çулйĕр йусас уйăх пирĕн кăçал та пулаť, ăна пирĕн йепле те пулин хастарлăраххăн ирттерме тăрăшмалла.

Телефон, телекраф, пуштă, ратио таврашсене пирĕн кăçал паҫах лайăхлатма тăрăшас пулаť. Пирĕн ку йенҫен çитмĕнлĕхсем питĕ нумай-ха. Çав ĕçе лайăхлатас май кăçал пирĕн 1 мĕлйун та 149 пин тенкĕлĕх çĕнĕ строиттĕлствă тумалла.

## Алăста копператси.

Алăста копператси пирĕн иртнĕ çулта пысăк ӳсĕмсем турĕ, çĕнĕрен темиçе претприйатти туса лартрĕ, ҫленсем те йышлансах пыраççĕ.

1932-мĕш çулта алăста копператси умне тата ответлăрах сатаҫсем тăрататпăр епĕр. Алăста копператсин кăçал темĕн ҫухлĕ строиттĕлствăра кирлĕ маттерйалсем тăвас пулаť, ĕçхалăхне пурнăçра кирлĕ йапаласем туса тавар нумайлатассишĕн ĕçлес пулаť.

Правиттĕлствă йышăннă план тăрăх 1932-мĕш çулта алăста копператсин çĕнĕ строиттĕлствă 825 пин тенкĕлĕх тумалла, вăл шутран 423 пинлĕх çĕнĕ претприйаттисем лартмалла.

Алăста копператсин протукси иртнĕ çулхинҫен 157,5 проҫҫăн маларах пулмалла.

Пилĕк çуллăх план кăтартнипе алăсти коппе-

ратсин 1933-мӗш ҫул тӗлне те 10 мӗлуний та 200 пинлӗх анҫах протукси памалла пулнӑ. Правительствӑ 1932-мӗш ҫул ваҫҫи йышӑннӑ плана пурнӑҫа кӗртсен вӑл хисепе 285 проҫҫӑн таран тултаратпӑр.

Уйрӑм сатаҫсене илсен, алӑсти копператсин кӑҫал 32 мӗлйун кирпӗҫ, 56 пин куп ҫул, 16 пин тоннӑ исвӗҫ, 15 пин куп хӑйӑр, 88 пин куп ҫурнӑ хӑма, 6 мӗлйун штук ҫӑпта т. ыт. те туса памалла.

Алӑсти промышлӗннӑҫӗнҫе ӗҫ ӳсӗмӗ 14 проҫҫӑн хӑпармалла, хӑйне ларакан тавар хакне— 12,3 проҫҫӑн ҫакармалла. Ҫав вӑхӑтрах протуксин пахалӑхне те хӑпартмалла.

Тавар пахалӑхне (каҫҫӑствине) илсен пирӗн алӑсти копператсин ҫитменлӗхсем питӗ нумай. Илӗр-ха кирпӗҫе. Кирпӗҫне тума тӑмне тӑрлавлӑ ҫӑрмаҫҫӗ, ҫителӗклӗ калит тумаҫҫӗ, ҫавӑнпа вара виҫ пайран пӗр пайӗ йахӑн ӗҫе йурӑхсӑр пулаӗ. Апла йурамасӗ вӑл. Пӑхӑр-ха ак Шупашкарти кив ҫуртсене, хӑшӗ-пӗри Ҫтеппан Раҫӑн пулнӑ ҫухнехи пулнӑ теҫҫӗ, халӗ те хӑнт та мар, лайӑх кирпӗҫ тухаӗ, мӗншӗн тесен, ӑна тӑвас тесе тунӑ. Пирӗн каҫҫӑствӑ йенҫен лайӑхлатассишӗн питӗ тим тӑрӑшмалла, унсӑрӑн йурамасӗ, йулташсем.

Алӑсти копператсинҫе халӗ 24.600 ҫлен, ӑна 41.580 ҫына ҫитермелле кӑҫал.

Алӑсти ӗҫне пирӗн кирек мӗнле майсемпе те сарма тӑрӑшмалла, ӑна ҫӑрмавлакансене хӗстерес пулаӗ.

Хӑшпӗр ҫӗрте колхос правленисем алӑста ӗҫне пӗтерсе лартас майлӑ хӑтланкалаҫҫӗ. Йе-

тĕрне çывăхĕнђи йалсенђе иртнĕ çулсенђе темĕн ђухлĕ йăмра-хăва пĕкĕсем, урапа-çуна таврашсем тăватђĕç, халĕ сахалланђĕ. Апла йурамасӑ. Пирĕн аласта ĕçне пур çĕрте те вăйлăн сарса йама тăрăшмалла, кирек хăш колхосра та аласта ĕçпе тытăнмалла, вăл усăллă ĕç.

## Снапшсни çинђен.

Ĕçхалăхне тĕрлĕ апат-çимĕç тата хула таварĕ кӳрсе парас ĕç те пирĕн кăçал ђылай сарăлмалла. Ун майпе пирĕн макаçăнсем, склатсем т. ыт. строиттĕлствăна сармалла. Çавна тума кăçал 748 пин расхут тухмалла, вăл шутран Сойусхлеп 50 пинлĕх, Сойусмессă 210 пин, Сойусплотоовăшђ—110 пинлĕх стройккăсем тумалла.

Потрепкопператсин 1 мĕлйун та 292 пинлĕх строиттĕлствă пулмалла, вăл шутран 413 пин—столовăйсем, çăкăр пĕçĕрекен савăтсем тăвас çĕре каймалла, тата 348 пин хула çывăхĕнђи фермăсем валђђи, 240 пин лапкасемпе склатсем тума каймалла.

Хула çывăхĕнђи фермăсен кăçал рапођђисем валђђи 1035 тоннă сĕт, 11.253 тоннă пахђа-çимĕç туса памалла.

Потрепкопператсин столовăйсем кăçал хапрăк-савăтри рапођђисем валђђи кашнă кун 92 пин апат çитерекен пулмалла, иртнĕ çулта вăл 49 пин анђах пулнă пирĕн.

Ђленсен йышĕ халђхи хисепрен 93.000 çынна çитмелле, пай укçи те ђылай хутшăнмалла.

Кăçал 52 мĕлйун тенкĕлĕх тавар сутмалла, иртнĕ çул 38 мĕлйунлăх пулнă.

## Еҫ пирки.

Правиттĕлствă йышăннă халăх хуҫалăх планĕ тăрăх 1932-мĕш ҫулта рапоҍҍисемпе слушăшҍисем 40.000 сынна ҫитмелле, иртнĕ ҫулхинҍен 8.000 нумайрах пулмалла, вăл шутран патшалăх промышлĕннăҫĕнҍе происвотствăра ĕҫлекен рапоҍҍисем 5500 сынран 8.400 сынна ҫитмелле.

Ҫав ĕҫлекенсем илекен ĕҫукҫи хисĕпĕ 38 мĕлйун та 920 пин тенке ҫитмелле, иртнĕ ҫулхинҍен 10 мĕлйун маларах пулмалла.

Сотсиаљни страххоҳвани пӳтшеҍĕ 4 мĕлйун та 700 пине ҫитмелле.

Рапоҍҍисен пурнăҫне лайăхлатма тăвакан фонт 56 пинрен 200 пин таран ӳсмелле.

Кăҫал пирĕн пур хапрăк-савăтри рапоҍҍисем те 8 сехет ĕҫлес вырăнне 7 сехет анҍах ĕҫлес йĕркене куҫмалла.

Рапоҍҍисем ваљљи пурăнма ҫуртйĕр 2 мĕлйун та 800 пин тенкĕлĕх тумалла. Пĕлтĕр 2 мĕлйунлăх тунă. Ҫавна тусан пирĕн хваттĕр 44 пин тваткăл меттăр хутшăнмалла.

Комунаљнăй хуҫайствăра кăҫал 2 мĕлйун та 235 пин тенкĕлĕх ҫĕн строиттĕлствă пулмалла, иртнĕ ҫулта 1 мĕлйун та 137 пинлĕх анҍах пулнăҍĕ вăл.

Ҫавăн ҍухлĕ нумай ҫĕнĕ строиттĕлствă пулин те епĕр ăна ҫителĕклĕ теме пултармастпăр. Епĕр халĕ крайпа ҍентăрти оркăнсем умĕнҍе хула строиттĕлствине тата хăвăртрах ӳстерес пирки йури ыйту лартма шутлатпăр. Ҫак килес уйăх-

сенҫех ăна малтан хамăр правиттĕлствăра сӳтсе йавса, ҫентăрта лартас майпа ёҫлетпĕр.

Хула хуҫалăхне пирĕн лайăхлатмаллах, пуринҫеп ытла Шупашкарпа Канаш хулисене лайăхлатмалла. Шупашкар хулине ҫăн ҫăнах сотсиалисăмлă столитсă тума тăрăшмалла.

## Катăрсемпе култтур ҫинҫен.

Правиттĕлствă йышăннă плап тăрăх 1932-мĕш ҫулта 1-мĕш сыпăк шкулта вĕренекенсен хисепĕ 112.800 аҫана ҫитмелле, пĕр аҫа та вĕренменни йулмалла мар.

Хут пĕлменнисене 131.900 ҫын вĕрентсе кăлармалла, вара Ҫăваш авттономи 12 ҫул тултарнă тĕле пĕтĕм респуплĕкĕпе хут пĕлмен пулса тăмалла.

Хамăр респуплĕкри аслă шкулсенҫе вĕренекенсен хисепĕ 1.100 ҫынна ҫитмелле. Урăх хуласенҫе, крайсенҫе пирĕн халĕ 2.000 ҫын ытла аслă шкулта вĕренеҫҫĕ.

Технĕккăмсенҫе вĕренекенсен хисепĕ 7.600 ҫынна ҫитмелле, иртнĕ ҫулта 5.200 пулнă.

Рапфаксенҫе вĕренекенсен хисепĕ 2170 ҫынна ҫитмелле, пĕлтĕр—1460 ҫын вĕреннĕ.

ШКМ-сенҫе, ФСС, ШКС-сенҫе вĕренекенсен хисепĕ 25.400 ҫынна ҫитмелле, иртнĕ ҫулта 14.800 пулнă.

Профшколпа ФСУ-сенҫе вĕренекенсен хисепĕ 6.600 ҫынна ҫитмелле, пĕлтĕр 4500 пулнă.

Кăҫал пирĕн технĕккăмсенҫе 812 ҫын вĕренсе тухмалла, вăл шутран интустри технĕккăмĕсенҫе 140, йалхуҫалăх технĕккăмĕсенҫе 180,

петакăк технĕккăмĕсенђен 440 тата хутошĕствă ĕçне вĕрентекен технĕккăмсенђен 25 çын.

Пысăк квалификкатсиллĕ рапођђисене хатĕрлес пирки ФСУ урлă 1636 çын, курссенђе 2280 çын, строиттĕлсен курсĕнђе 2100 çын вĕрентсе кăлармалла.

Мĕн пур катăр хатĕрлес расхут кăçал пирĕн 8 мĕлйун та 664 пин пулмалла. Пĕлтĕр вăл 4 мĕлйун çурă анђах пулнă.

Шупашкарта кăçал технĕккă çурђĕ туса лартмалла.

Кăçал пирĕн çĕнĕрен 1 мĕлйун тенкĕлĕх ытла шкулсем туса лартмалла.

Куљттур ĕçне хăпартма кăçал епĕр 21 мĕлйун ытла расхут йышăнтăмăр.

Ĕçхалăх сывлăхне пăхас тĕлĕшре те кăçал епĕр пысăк утăмсем тăватпăр. Пуљнитсасенђе 1170 койккă вырăнне 1400 койккă пулаĭ, ађа йаçлисем 12-рен 30 çитеççĕ.

Шупашкарта çĕнĕрен хирургиђђĕски леђђеппĕтсă, тата куç пуљнитси туса лартма йышăннă.

Çапла вара кăçал ĕçхалăх сывлăхне лайăхлатас майпа 5 мĕлйун та 613 пин тенкĕ пама йышăнтăмăр.

Пирĕн умра траххом ђирне хăвăртрах пĕтерес атађ питĕ çивĕђђĕн тăраĭ, ăна пирĕн йепле те пулин хăвăртрах пĕтересшĕн тăрăшмалла.

## Укçа-тенкĕ хуçалăхĕ.

Вырăнти пўтшет 1932-мĕш çулта пирĕн 29 мĕлйун та 300 пин тенке çитмелле. Иртнĕ çулта 20 мĕлйун та 100 пин пулнă.

Пилĕк çуллăх план тăрăх пирĕн пӳтшет 1933-мĕш çулта та 22 мĕлйун та 300 пине анђа̄х çитмелле пулнă. Çав хисеппе шутласан епĕр кăçалах ăна 131,4 прођђăн тултаратпăр.

Пĕтĕм хуçалăх финанс планне епĕр туса пĕтеремерĕмĕр-ха, ăна çак килес уйăхра тăватпăр пуљ тесе шанатпăр.

Укçа-тенкĕ йенђен пирĕн тисђиплина хытарас пулаŷ, хăш пĕр çĕрте укçа-тенке шеллерех тытма пĕлмеççĕ, вырăнлă çĕре йамаççĕ.

Укçа-тенкĕ вăл çирĕп кăсйара пулмалла, совет влаçĕ кăтартнă йĕркесене пĕр пăрăнмасăр тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пымалла.

## Ђăваш респуплĕкĕ пысăк интустриллĕ пулаŷ.

Пирĕн умра 1932-мĕш çулта пысăк сатађсем тăраççĕ. Вĕсене пурне те пурнăçа кĕртесшĕн калама çук тимлĕн кĕрешмелле.

Малашне тата пирĕн ума тата пысăкрах, тата ответлăрах сатађсем тухса тăраççĕ. Епĕ кĕскен те пулин иккĕмĕш пилĕк çуллăх план çинђен калатăп.

Есĕр пурте Шупашкарта пысăк китростантси тата кăнтăр йенђи районсенђе енеркохимкомпинат т. ыт. пысăк претприйаттисем тума шутлани çинђен илткеленĕ пулас, хаçатсем çинђе те вулакаланă пулас.

Ђи малтан епĕр китростантси çинђен кĕскен калас тетĕп.

Атăл шывне пĕвелесе пысăк китростантси тă-

васси, Атăл шывĕн вăйĕпе електритсă енерки тăвас сатаҫ тăраҫ халĕ пирĕн умра. Ăстаçăсем шутланă тăрăх Атăл шывне 19 меттăр çурă хăпартмалла. Йарослав хули патне çитиҫҫен çав пĕвен таппи çитмелле, тарнăшĕ 3 меттăртан кайа ниçта та пулмалла мар. Вара Атăл тăрăх Рыпĕнскине çитиҫҫен тинĕс карапĕсем çӳрекен пулмалла. Рыпĕнскинҫен çӳлелле те пĕвесем пулмалла, çапла вара Каçпи тинĕсĕнҫен Ленинкрата, унтан вара Палтти тинĕсне карапсем тухакан пулмалла. Çав сатаҫа пурнăçа кĕртни Совет сойусĕшĕн питĕ паха йапала, вăл Совет сойусĕнҫе транспăрт условисене тĕпрен лайăхлатма май параҫ.

Шупашкар патĕнҫи пĕве çинҫи китростантси 400.000 киловат електритсă енерки паракан пулмалла. Ăна тума 800 мĕлйун тенкĕ расхут тухмалла.

Çав тери вăйлă електритсă стантси туса лартни пĕтĕм Совет сойусĕн хуçалăхне вăйлатса йараҫ, пирĕн крайшăн вăл промышлĕннăç ҫĕри пулса тăраҫ.

Унашкал пысăк вăйлă електритсă стантсисем тĕнҫипе те çукпа пĕрех.

Вăл китростантсийе туни пирĕн Ҫăваш респуплĕкне пĕтĕмпех çĕнетмелле. Ҫăваш респуплĕк Совет сойусĕнҫе ҫи вăйлă промышлĕннăçлă район пулса тăма пултараҫ.

Китростантси çумĕнҫе калама çук пысăк хаппăксем, савăтсем туса лартмалла. Пирĕн ăна тума май пулаҫ, мĕншĕн тесен, пирĕнтен çывăхра Урал ҫукунпа тимĕрĕ, пирĕн çывăхра Куспас

çĕр кăмрăкĕ. Пирĕн хамăр çĕршывра та темĕн ђухлĕ сырйо пур, ун çинђен малтан каласа патăм епĕ.

Çав Уралпа Куспас тăвакан ђукунпа тимĕре таçта инçе айакка турттарни усăллă мар, ăна çывăхрах, ăçта електритсă енерки нумай, тата вăл йӳнĕ,—çавăнта хуçалăхра кирлĕ йапаласем туни усăллăрах. Çав майпа ĕнтĕ пирĕн Шупашкар патĕнђе тĕрлĕ машшинсем тăвакан савăтсем, електритсă енеркипе кађђăствă йенђен лайăх хурăçсем тăвакан савăтсем, алђумини савăђĕ, хими савăђĕсем туса лартмалла пулаť.

Шупашкар патĕнђи китростантси, тата ун çумĕнђи промышлĕннăç кăмпинађĕ пирĕн енеркохимкомпинатпа тађă çыхăнуллă пулмалла.

Çапла вара Ђăваш республĕкĕ хуçалăхпа кулђтур тĕлĕшĕнђен електритсă, хими, тата метталлурки никĕсĕ çинђе вăйлăн ӳссе каймалла.

Китростантси туни çĕнĕ произвотствăсем: машшиностройени, електритсă метталлурки, електритсă хими, тĕп хими промышлĕннăç, лакпа краскă промышлĕннăç, мотторостройени, сутостройени т. ыт. те оркаисатсилеме май туса параť.

Китростантси тăвас майпе пирĕн кăçалах Канашпа Шупашкар хушшинђе ђукунçул туса лартмалла, Вăрмар районĕнђе çулталăкра 1 мĕлйун пиђке ытла ђемĕнт тăвакан савăт туса лартмалла. Унсăр пуçне тата теппĕл кăларса çурт тума кирлĕ фипролит тăвакан савăтсем туса лартмалла.

Кăçал тытăнса килес çул çуркунне пирĕн ра-

поҫҫисем валҫи 20.000 ҫемйе пурӑнмаллӑх ҫӗнӗ хула туса лартмалла.

Шупашкар хулине темиҫе ҫӗр ҫул хушши тунӑ, ҫавах та унта 16 пин пурӑнмаллӑх анҫах. Ҫӗнӗ хула—пӗр Шупашкар ҫурӑ—ҫулталӑк хушшинҫех пулса лармалла.

Китростантси тӑвас пирки халӗ тӗпҫев ӗҫӗсем пыраҫҫӗ. Ҫак кунсенҫе тата ҫӗнӗрен 30 станок ӗҫе тытӑнмалла.

Халӗ вӑл ӗҫпе 10 иншенерпе технӗк ӗҫлеҫҫӗ, ҫак килес кунсенҫе тата 30 иншенерпе технӗк пулмалла, март уйӑхӗнҫе 70—80 иншенере ҫитмелле, май уйӑх тӗлнелле 120 иншенер килмелле.

Пирӗн китростантсин строиттӗлствине тума Гар хушаматлӑ иншенера наснаҫҫени панӑ. Ӗҫсене Тнепростройра ӗҫлекен иншенерсемпе професӑрсем тумалла.

Ку таранҫҫен тӗпҫенӗ тӑрӑх Атӑл пирӗн майлине кӑтартаҭ, пирӗн патрах китростантси тумаллине кӑтартаҭ. Ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ телейлӗ вырӑнта пурӑннине кӑтартаҭ.

Енеркохимкомпинат тӑвас ӗҫре епӗр кӑҫал пӗрремӗш утӑм тӑватпӑр, кӑҫал пӗр рутник ӗҫе кӗртме тӑрӑшатпӑр. Ку кӑмпинат та пирӗн питӗ пысӑк пулмалла. Унӑн пуҫӗнҫе 300 пин киловат таран електритсӑ енерки тӑвакан електритсӑ стантси пулмалла, вӑл шутран малтанхи ҫеретрийех 140 пин киловат паракан пулмалла. Кӑмпинатра темӗн ҫул пысӑк савӑтсем пулмалла. Ӑна тума 200 мӗлйун ытла расхут тухмалла.

Иккӗмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӑрӑх епӗр 1933-мӗш ҫулпа 1937-мӗш ҫулсем хушшинҫе пӗр мӗл-

йарт çурлăх çĕнĕ хапрăк-савăтсем лартма шутлатпăр.

Рапоҫҫи клас темиçе хут йышланмалла, хапрăк-савăтра ĕçлекенсен хисепĕ 100 пин çынна йахăн ӳсмелле.

Çавнашкал пирĕн малалла пулас ĕçсем.

Çав ĕçсене ҫăн ҫăнах тим тытăнас тесен пирĕн ҫи малтан кăçалхи плана пурнăçа пĕтĕмпех кĕртесшĕн хытă кĕрешмелле.

Кăçалхи план пирĕн пысăк план, ответлă план. Ăна пурнăçа кĕртме мĕн пур ĕçхалăхĕн тимлесе ĕçлемелле. Партти орканисатçин, комсомолăн, профсойуссен, колхоçнĕксен, ҫухăнпа вăтам хресҫенсен, мĕн пур ĕçхалăхĕн ҫĕререн, тăвасах тесе ĕçлесе, клас тăшманĕпе паттăрăн кĕрешсе, оппорттуниссене çĕмĕрсе—мĕн пур вăй-хăвата хурса ĕçлемелле.

1932-мĕш çулхи халăх хуçалăх планне пурнăçа кĕртес тĕлĕшре ĕçхалăхне советсен йертсе пымалла. Советсен—партти кăтартса панă çулйĕрпе—ĕçхалăх хастарлăхне пĕрлештерсе сотсиалисăм строиттĕлствине вăйлатасшăн кĕрешмелле. Советсен—ĕçхалăх пуçĕнҫе пымалла. Ĕçхалăх пуçĕнҫе пырас тесен—вĕсен ĕçĕ тата хастарлăрах, тата йĕркеллĕрех пулмалла.

Пирĕн советсен ĕçне лайăхлатмалла, вĕсен ĕçне активлăрах тумалла. Советсен ĕçне пĕтĕм ĕçхалăхне тытăнтармалла. Советсен ĕçĕнҫе халĕ пирĕн çитменлĕхсем ҫылайах пур, çексисем тăвас тĕлĕшре, вĕсен ĕçне йĕркелес тĕлĕшре, колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнҫен тĕреклентерес йенҫен хăшпĕр çĕрте сахал пулăшаççĕ.

Хăшпĕр советсем клас тăшманĕсемпе—кулаксемпе çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Патшалăх панă санисене вăхăтра тултарас тĕлĕшре сӳрĕк ĕçлеççĕ, ђылай çĕрте халĕ те тырпул пухас ĕçе пĕтермен, укçа-тенкĕ пухас ĕçе те тимлĕ туса пымаççĕ.

Хăшпĕр советсем хуçалăх ĕç çине çавăрăнса та пăхмаççĕ: йалти шкул, йалти пуђнитса, йалти вуламалли çурт, пушар хатĕрĕсем, опђă ампарĕсем-склађĕсем, çулйĕр таврашсем, кĕпер таврашсем т. ыт. те мĕнли çине пăхмаççĕ.

Халĕ пирĕн пур йалсоветсен те пӳтшет хăйсен аллинђе, йалти хуçалăхри нушасене тӳрлетсе пыма хăйсен укçа-тенкĕ пур, текех райĕçтăвком куçĕнђен пăхмалла мар. Анђах пӳтшетра кăтартнă тоххотсене пухас йенђен ђылай çĕрте тимлĕ ĕçлеменни курăнать.

Ђылай çĕрте копператтивсем тăрлавлă ĕçлемении пур, хăш пĕрисенђе растраттăсем тăваççĕ, хресђенсене кирлĕ хула таварĕсене çителĕклĕ тăратмаççĕ, Çавсем çине те хăшпĕр çĕрте советсем тăрлавлă пăхмаççĕ.

Апла йурамасть текех, йулташсем. Советсен ĕçне хăвăртрах йусама тăрăшмалла. Пирĕн респуплĕкре питĕ ђипер ĕçлекен советсем пур, ак сăмахран, Шупашкар районĕнђе Ишек йалсоветђĕ, Йĕтĕрне районĕнђе Шемертен йалсоветђĕ, т. ыт. те. Çав малта пыракан йалсоветђĕсен оппăтне илсе ытти советсен ĕçне лайăхлатмалла.

Хула советђĕсем те пирĕн хăшпĕрисем çителĕклех ĕçлемеççĕ, рапођђисене хăйсен ĕçне хутшăнтарни сахал.

Советсен ĕçпе лайăхлатас тĕлĕшре райĕçтăвкомсен тимлĕрех пулмалла, райĕçтăвкомсен хăйсен ĕçĕсене çивĕҫрех тăвакан пулмалла. Районри аппаратăн йалти оркăнĕсене, ҫи малтан йалсоветне çителĕклĕ пулăшу паракан пулмалла.

Йалти ĕçсене претçетаттĕлпе çекреттарĕ анҫах туни килĕшӳллĕ мар вăл. Мĕн пур пысăкрах ĕçсене пĕтĕм совет ҫленĕсемпе тумалла, çав майпе советсен пленăмсене ҫас ҫасах туса ирттермелле. Советсен ĕçне мĕн пур йалти актива хутшăнтармалла, советсен мĕн пур ĕçре те колхоçнĕксемпе çыхăнуллă пулмалла.

* * *

Сталин йулташ çапла калать:—**Пирĕн производствă планĕ ҫăннипех пурнăçа кĕресси—вăл çĕнĕ пурнăç тăвакан темиçе мĕлйунлă ĕçхалăх. Пирĕн прокрам пурнăçа кĕресси—вăл халĕ пурнакан çынсем, вăл—епĕр хамăр, епĕр ĕçшĕн тăни, епĕр çĕнĕлле ĕçлессишĕн йаланах хатĕрри, епĕр плана тултарассишĕн паттăрла, хăйуллăн кĕрешме пулни,—тенĕ Сталин йулташ.**

Совет сойусĕпе пĕрле Ҫăваш респуплĕкĕнҫе те шалта клас тăшманне татăклах аркатса тăкнă, анҫах вăл пĕтмеллипех пĕтмен-ха. Унăн шухăшĕсем, унăн алли палăрни пур. Ăçта кăшт май пур, вăл унта хĕсĕнсе кĕрсе кайма тăрăшать. Пирĕн хуçалăх аппараҫĕн хăшпĕр уйрăм пайĕсенҫе ларать вăл,—хăшпĕр совхоссенҫе, колхоссенҫе ĕçе арпаштарать вăл. Вара унта тепĕр ҫух кулакла-пуршуйла туртăмсем сиксе тухаççĕ, пирĕн плансене путарса лартма тăрăшаççĕ.

Ĕçре оппорттунисăм пулмалла мар. Вăл совета хирĕç фронтпа çыпçăнаť. Совета хирĕç контрреволђутсиллĕ фронт пуçĕнђе халĕ тротскисăм тăраť. Оппорттунисăма хăйуллăн çĕнтерсе пырсан тин, ĕçхалăх массисене тĕнђе курман пысăк ĕçсем тума мопилисатсилесен анђах сотсиалисăм тăвассишĕн паттăр кĕрешме пулаť.

Сотсиалисăмла ăмăрту, тата утарнĕђђĕствă—тăваттăмĕш çул планне тултарассишĕн кĕрешес ĕçре çĕнтерӳллĕ вăй пулса пыраççĕ. Сотсиалисăмлă ăмăртăва хăйуллăн сарса пымалла. Сотсиалисăмла ăмăртăва рапођђи класăн çĕнĕ сийĕсене хутшăнтармалла. Сотсиалисăмла ăмăртăва кашни уђаскăра хăйне тивĕçлĕ йертсе пымалла.

Сотсиалисăмла ăмăртун çĕнĕ пахаран паха хурăмĕсене çийеле кăлармалла. Çаксемшĕн ĕнтĕ полђшевикла кĕрешмелле пирĕн—партти, совет, профсойус, тата хуçалăх çыннисемпе оркянисатсисен. Пуринђен ытла рапођђисен çĕнĕ сийĕсем çине пăхарах пималла. Епĕр вĕсене пĕтĕмпех хамăр политтĕк ĕçĕсемпе çавăрса илмелле. Çĕнĕ рапођђисем пурте малта пыракан рапођђисемпе пĕр утăмпа пыђђăр, пĕтĕм рапођђи клас сотсиалисăмшăн хĕрӳллĕ кĕрештĕр.

Совет сойусĕнђи рапођђи клас сотсиалисăм строиттĕлстви ĕçĕшĕн пуçне хума йаланах хатĕр тăнине пĕрре мар, темиçе те кăтартрĕ. Епĕр татăклă, ĕмĕрлĕхе çĕнтерессине витĕмлĕ шантарса тăраť вăл.

Тем пек хăватлă çĕнтерӳсем туса пыни, сотсиалисăмла еккономĕк никĕсне хывса çитерни, пилĕк çуллăх плана тăвата çулта пурнăçа кĕр-

тесси кăçалхи çул пулса тăмалли—рапоҌҌи класа тата колхосри хресҌенсене питĕ хытă хаваслантарaӑ, çĕнĕ вăй параӑ. Вăл вăйсемпе 1932-мĕш çул планне ытлашшипех тултарасси халĕ тахçанхиҌен те шанҌăклă..

**Пилĕк çуллăх плана тăвату çулта тултарса епĕр пĕтĕм тĕнҌери ĕçхалăхне кăпиталисăм ишĕлĕвĕнҌен мĕнле хăтăлмаллине кĕретĕнех кăтартатпăр. Пĕтĕм тĕнҌери ĕçхалăх кăпиталисăм крисĕсĕнҌен хăтăлма пĕртен пĕр тĕрĕс çул кăна пуррине куçпа курса пĕлсе пыраӑ ĕнтĕ. Вăл çул сотсиалисăмла револҌутси, пролеттариат тиктаттурĕ.**

Плана ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешни кăçал тахçанхинҌен те ытларах Совет сойус сыхлавне вăйлатас ыйтупа таҌă çыхăнса тăраӑ. Кăçал тахçанхинҌен те ытларах пире вăрçăпа тапăнма тăрмашни кĕретĕнех палăрма пуçларĕ. Пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртсе, епĕр Совет сойусне çирĕплететпĕр. Ку тĕлĕшпе пирĕн ĕнтĕ пысăк çĕнтерӳсемех пур. АнҌах пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртни епĕр кăпиталисăмла патшалăхсен хуçалăхĕнҌен паҌах ирĕклĕ пулса çитнине пĕлтерет, епĕр малалла тата çивĕҌрех хăвăртлăхсемпе кайассине пĕлтерет.

Епĕр кăпиталисăмла çĕршывсемпе хутшăнса тăма откас памастпăр. АнҌах кăпиталиссем пирĕн ӳсĕме Ҍăрмантарма ан пултарҌҌăр, нимле економĕк плоккати те Совет сойусĕ сотсиалисăм строиттĕлствине çĕнтерӳллĕ илсе пынине такăнтарма ан пултарҌҌăр тесе, епĕр хамăр ху-

çалăха вĕсене пăхăнмалла мар çулпа илсе хăпартса пыратпăр.

Империалиссем Совет сойусне тата тепĕр хут хĕçпăшалпа тапăнма хăйсан, ĕçхалăх вĕсене ĕмĕр асăнмаллăх çĕмĕрсе тăкма мĕн кирли пурте хамăр алăра пултăр.

Тата вăйлăрах сотсиалисăмла ăмăртупа утарнĕђђăства сарса йарар. Оппорттунисăмпа, унпа килĕшнипе, çĕрĕк липериалисăмпа тата хăйуллăрах кĕрешер. Сталин йулташăн 6 условине кашни кулленхи ĕçре пурнăçа кĕртсе пырар. 1932-мĕш çулта ђăн ђăнах çĕнĕлле ĕçлер.

**Вара пилĕк çуллăх плана ђăннипех тăвать çулта пурнăçа кĕртĕпĕр, сотсиалисăм опђи тăвас ĕçре тата вăйлă утăм йарса пусатпăр, комунисăм пĕтĕм тĕнђипех çĕнтерсе илес вăхăта çывхартатпăр.**

**Сывă пултăр пилĕк çуллăх плана 4 çулта пурнăçа кĕртесси.**

**Сывă пултăр сотсиалисăм!**

Послано в производство 20/II-1932 г.
Подписано к печати 25/II-1932 г.
Техредактор А. Лукин.

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

Уполн. Чувашлита № 1346. Заказ № 348. Чувгиз № 445
Ст.ф.Б. 110×150. 2 п/л. 44000 п/зн. в п/л Тираж 6100 экз.

Хакĕ 20 пус
Цена 20 коп.

ОП—13

Л. С. СПАСОВ

# Чувашская республика на пути строительства крупных фабрик и заводов крупного земледелия

1932 ЧУВАШГОСИЗДАТ